А47
35733-чув

Осип Алексеев - Ăсан Уçăпĕ



# ЧĂВАШ ВĂРМАНĔ

Национальная библиотека ЧР
4-035733

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

*Ачамсен амăшне, çут тĕнчерен ир уйрăлнă Наталия Степановна Алексеева-Терентьевăна халаллатăп.*

**Осип**
**Алексеев - Ăсан Уçăпĕ**

# ЧĂВАШ ВĂРМАНĔ

Шупашкар, 1996

13 (2 рос. Чув)
Обязат. экз.

ББК 84 Чув. 7-4
А 46

**Алексеев О. А.**
А 46 Чăваш вăрманĕ. - Шупашкар, 1996 ç.
**Чăваш Республикин çут çанталăк ресурсĕсем тата тавралăха сыхлас ĕç министерстви.**

Кĕнекере чăваш çĕрĕ çинчи вăрмансен илемне çут çанталăкăн тĕрлĕ тапхăрĕнче сăнланă. Хамăр тăрăхра ӳсекен йывăçсен хитрелĕхне, мĕнле ĕрченине, уссине, авалран вăл е ку йывăçран кил-çуртра мĕн-мĕн ăсталанине, промышленность шайĕнче мĕнле усă курнине çырса кăтартнă. Пособире пирĕн вăрмансенче пурăнакан чĕр чунсемпе вĕçен кайăксем, хурт-кăпшанкă çинчен те каласа панă.

Кĕнеке, шкул çулĕнчи ачасем валли хатĕрленĕскер, кĕçĕн ӳсĕме вăрман уссине пĕлме-туйма пулăшĕ, çут çанталăк илемне упрама вĕрентĕ. Унта çитĕннисем те интереслине тупĕç.

ПРОВЕРЕНО
2010

35733-чув
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ISBN 5-7361-0020-7

© О. Алексеев, 1996 ç.

# ВĂРМАН

Вăрман илемĕ хĕлле те, çулла та, кĕркунне те, çуркунне те хăй патне туртать. Хĕллехи лăпкă т'а хĕвеллĕ кун йĕлтĕрпе вăрмана тухсан уçă та таса сывлăшпа киленетĕн. Йывăçсем айĕнче - тарăн шурă-шурă юр. Вăл йывăçсен тымарĕсене хĕллехи шартлама сивĕрен хӳтĕлет. Хулăн пас йывăрăшĕпе çамрăк хурăнсем вăрман илемĕпе савăнма тухнă çынсен сукмакĕ е йĕлме йĕлтĕр йĕрĕ урлă пĕкĕ пек авăннă. Симĕс хырчăрăш шурă юр айĕнче аякран çĕлĕк тăхăннăн курăнать. Кĕтмен-туман çĕртен çак шур çĕлĕк çӳллĕ чăрăш тăрринчен татăлса анать те юр кĕмĕл тусанĕн вĕçсе саланать. Юр йывăрăшĕнчен пушаннă симĕс чăрăш турачĕ вăрахчен силленсе ларать. Хăмăр кăвак йĕкеллĕ хыр тураттисем тетте çакнăн курăнаççĕ. Хĕрлĕ пĕсехеллĕ кукăр сăмса кĕтĕвĕ хаваслă сасă кăларса чăрăш çинчен чăрăш çине вĕçе-вĕçе ларать. Кайăксем турата силленипе йĕкелсем пĕр-пĕрин çумне çапăна-çапăна шакăртатса илеççĕ.

Хура-сарă вулăллă хырсем шăппăн-шăппăн тĕлĕреççĕ. Вĕсен мĕлкисем шурă юр çинче вăрăммăн-вăрăммăн тăсăлса хĕресленеççĕ: çатан карта тытнă тейĕн ку вырăнта. Тĕлĕрнĕ пек ларакан вăрманта та çивĕч хăлхаллă çын тĕрлĕ сасă илтет. Акă инçех мар улатакка чирлĕ йывăçа сиплет, так! так-так! таккать. Сăрă хĕрлемес пăчăр хăйне евĕр сасă кăларса вĕçсе иртет, мăшăрĕпе йывăçсем хушшине кĕрсе çухалать. Ашкăнчăк пакша чăрăш тăрринче пиçсе çитнĕ йĕкеле тăпăлтарать: юр çине хура хывăх - сухăр тăкăнать. Вăрман хĕрринче чĕвĕл-чĕвĕл кĕпшĕл ушкăнĕ туй тăвать.

Хăйне евĕр пурнăç хĕллехи вăрманăн. Турат çинчен турат çине сиксе ывăннă пакша юр çинче йывăçран йывăç патне çӳресе тарăн мар йĕр хăварнă, кунтах вăрман шăшийĕ чупса иртнĕ. Кайăксем çӳрени те палăрать.

Çуркунне пĕтĕм тĕнче вăраннă, чылай çын куçĕнчен-хăлхинчен пытаннă шавлă пурнăç çуралнă чухне вăрман хăйне евĕр лайăх. Юр ирĕлсе кӳлленчĕке куçать, унтан çырмана васкать. Пуç тăрринче - çурхи сĕткенпе тулнă папаклă çинçе хурăн тураттисем. Çурхи куна мухтакан кайăксен сасси хытăрах та хытăрах илтĕнет. Пирĕн тăрăха таврăннă кайăксен сасси уçăмлăрах та янравлăрах туйăнать. Акă карăксем туйла-

шаççĕ - мăшăр шыраççĕ. Хыр айĕнчи юр, кăшт хуралма ĕлкĕрнĕскер, чăрăш лăссипе хупланнă. Уçланкăсенчи тĕмескеллĕ вырăнсем юртан тасалнă. Хытă çулçăллă кĕтмел те курăнма тытăннă. Çуркунне çитнине, çĕр ăшăнма пуçланине систерсе шурă, кăвак çеçпĕл тапса тухнă, тавралăха чĕрĕлĕх сăнĕ кĕртнĕ. Хыр-чăрăш, тĕрлĕ йывăç хуппин шăрши сăмсана кăтăклать. Пилеш кайăкĕн чĕвĕл-чик-чăр-р! сасси таврара янăрать. Çўллĕ йывăçсен тăрринче, самаях хăпарнă хĕвел çуттинче, вăрманта пурăнакан улатăпа кăвакарчăн кăлтăртатать. Пур чĕр чунпа кайăккĕшĕкшĕн савăнăçлă кун çитет, хурăнлăхри уçланкă симĕс курăкпа витĕнет. Куккук кам миçе çул пурăннине шутлама тытăнать. Ирпе, тул çутăлса килнĕ вăхăтра, тĕрлĕ тĕспе çуталакан ăсансен туйĕ пуçланать. Каçхине вăрман тăрринче вăрăм сăмсаллă кăрăпчак хăрăлтатать-шĕвĕлтетет. Юхан шывсен тăрăхĕнче кайăк кăвакалсем нартлатаççĕ. Вăрман хĕрринчи шурлăх тĕлĕнче, çўлте-çўлте - шур качакисен туйĕ.

Мĕнле кăна сасă илтĕнмест пулĕ хĕл ыйхинчен вăранакан çурхи вăрманта?! Пăчăрăн çинçе сасси, каçхи тăмана-ўхĕ хўхлевĕ чуна шиклентерет. Çын пырса кĕреймен шурлăхра ĕнер-паян вĕçсе килнĕ тăрнасем хăйсен чĕлхипе калаçаççĕ, "мăшăр шыраççĕ". Йăмра-хăван ылтăн тĕслĕ мамăкпа витĕннĕ кўпчек кăчкисем çинче хурт-хăмăр сăрлать. Юхан шыв хĕрринчи чăтлăхра тăван çĕре вĕçсе çитнипе савăнса шăпчăк юрă шăрантарать.

Уçă сывлăш кўрекен çуллахи тĕттĕм вăрманта вара пурнăç урăхларах. Ывăнма пĕлми юрлакан кайăксен сасси питех илтĕнмест, уççăн, илемлĕн янăракан шăпчăк сасси те çук.

Акă кăмпа вăхăчĕ те çитет: хăш кăмпа мĕнле вырăнта ўснине çеç пĕлмелле. Хутăш вăрманти йывăçсем айĕнче ăвăс кăмпин хĕрлĕ калпакĕ аякранах курăнать. Кунтах хушăран шур кăмпа е масла тĕл пулать. Хĕрлĕ тăрăллă шур пăнчăллă шăна кăмпи вăйăри хĕрсем пек ларса тухнă. Хырлăхра шăпкан е хыр кăмпи тĕл пулатăн. Çамрăк хурăнлăхра, çўллĕ упа сарри çулçисем айĕнче, хурăн кăмпи çитĕнет.

Уçланкăра, хĕвел питтинче, тутлă шăршлă çĕр çырли пиçет: çăвара хыпсанах ирĕлсе каять. Кăшт шаларах вăрманти хăмла çырли хĕрелет. Шурлăхран аякра мар, айлăмлă вырăнта, хура çырла тутăна ларать, симĕс туратлă кĕтмĕлĕн хĕрлĕ çырли курăк хушшинче курăнма тытăнать.

Хăйне евĕр илемлĕ тата тунсăхлă курăнать кĕркуннехи вăрман. Çулçисем хĕрлĕ хăмăр тĕспе витĕннĕ вĕренепе ăвăс кăвар пек çиçеççĕ. Хурăнăн сарă пĕчĕк çулçисем пĕлтĕртетсе сарăхнă курăк çине вĕçсе ўкеççĕ. Кăшт тĕкĕнсенех çыпăçакан эрешмен карти йывăçран йывăçа карăннă. Сас-чĕвсĕр тейĕн кĕркуннехи вăрмана. Çапах ура айĕнчи типнĕ çулçă кăштăртатни çывăхрах çын е пĕр-пĕр чĕр чун пулнине систерет. Унта-кунта кая юлса шăтса тухнă ăвăс кăмпин хĕрлĕ калпакĕ курăнать. Пăчăр çинçен шăхăрса илет. Çўлте-çўлте ăшă енне çул тытнă, тăван

тăрăхпа сывпуллашакан тăрнасемпе кайăк хурсен сасси илтĕнет: кикак-кика-ак!

Кĕркуннехи вăрманта чунра хуйăхлă, сывпуллашуллă туйăм. Тĕрлĕ-тĕрлĕ тĕспе витĕннĕ йывăçсем хушшинче çутă, сывлăш таса. Юхан шывсен тĕпĕ курăнать. Хăш-пĕр вырăнта кая юлса чечеке ларнă курăка асăрхатăн. Кайăксем хĕл каçма çула тухаççĕ. Сисмен хутран пилеш кайăкĕ сасă парать. Улатакка ывăнма пĕлми хăй ĕçне тăвать: так-так! так-так! Сăмси мĕнле чăтать-ши? Юман çулçи симĕс-ха. Вăл пиççе çитнĕ йĕкелне çĕре сапалать. Шĕшкĕ мăйăрне чылай маларах тăкнă. Хурăнсен тăррисем вара çап-çарах. Симĕссĕн-хуран курăнакан чăрăшлăхра ўссе ларнă ăвăссен çулçи те çатăлтата-çатăлтата çĕре ўкет. Йăмран сарă тенкисем вĕлтĕртете-вĕлтĕртете е йĕке евĕр пĕтĕрĕнсе аяккалла вĕçеççĕ е шыва ўксе ишсе каяççĕ. Татса пĕтермен пилешпе палан аякран хăмач пек, ярăм-ярăм хĕрлĕ шăрçа пек курăнса лараççĕ. Çўрес те çўрес килет ылтăн кĕркуннехи вăрманта.

Çапла пирĕн тăрăхри вăрмансенче юман, хыр, чăрăш, лиственница (Çĕпĕр чăвашĕсем ăна "лиçван" теççĕ), çăка, ăвăс, хурăн, вĕрене, тирек, каврăç, хурама, йăмра-хăва-çирĕк, пилеш, улмуççи, палан, çĕмĕрт, йытă çĕмĕрчĕ, шĕшкĕ, шăлан, хăмла çырли, кĕтмĕл ўсеççĕ, ытти тĕмсем те пур, йĕлме те тĕл пулать.





## ЮМАН

Пирĕн тăрăхри вăрмансенче юманран çирĕпрех тата хитререх йывăç çук та пуль. Ахальтен мар халапсенче, улăппаттăрсем çинчен калакан сăвăлла юмахсенче юман-паттăр сăнарĕ час-часах тĕл пулать. Юманăн вулли те, тураттисем те калама çук çирĕп.

Авал пирĕн тăрăхра юман йышлă ӳснĕ. Юманлăх тенĕ çав вырăнсене. Пысăк юманлăх халĕ сайра тĕл пулать. Юманран, вăл çирĕппине кура, авалах тĕрлĕ япала тунă. Юман хăми карап тума кайнă. Азов походне хатĕрленсе Петĕр патша Воронежран аякра мар карап тăвакан предприяти йĕркеленĕ. Кунта вырăнти юманпа усă курнă. Чăваш юманне те карап тума нумай тӳрттарнă.

Юман нумай çул ӳсет. Ăна çитĕнме темиçе çын ĕмĕрĕ кирлĕ. Вăрманçă-ăсчахсем каланă тăрăх, хăш-пĕр юман пин çул таран пурăнать. Вăрманта юман, йывăçсемпе тавлашса, чылай çӳллĕ ӳсет. Ирĕкре вара симĕс хытă çулçăсемпе витĕннĕ турачĕсене ытларах сарать. Çав юмансем çинче тĕрлĕ

кайӑк йӑва ҫавӑрать, хӳтлӗх тупать. Вӑйлӑ ҫил вӑхӑтӗнче ирӗкри юман хыттӑн шавлать. Ҫуркунне юман ытти йывӑҫсенчен каярах папка кӑларать, кӗркунне каярах ҫулҫине тӑкать.

Юманлӑхра лантӑш лайӑх ӳсет; ҫак тӑрӑхра ҫӗр ҫырлин те юратнӑ вырӑнӗ. Кӗркунне юман йӗкелне пуҫтарассӗ, ӑна сыснасене ҫитерессӗ. Выҫлӑх ҫулсенче йӗкел типӗтсе авӑртнӑ, ҫӑнӑх тунӑ. Йӗкеле хир сыснисем кӑмӑлласҫӗ, пакша та хыпса пӑхать. Юман ҫулҫи питӗ ҫирӗп. Сарӑхнӑ вилӗ ҫулҫасем йывӑҫ ҫинче хӑш чухне ҫур хӗлчченех ҫакӑнса тӑрассӗ, чӑшӑлтатса сас парассӗ.

Юман ытларах юхан шыв хӗрринче ӳсме юратать. Ҫыран катӑлса пырса улӑп юмансем шыва ӳкнӗ, юшкӑнпа, хӑйӑрпа витӗннӗ. Ытти йывӑҫсемпе танлаштарсан, юман шывра ҫӗрмест. Шывра вун-вун, ҫӗр-ҫӗр ҫул выртса юман хуралса ларать. Ҫавӑн пек юманран ҫирӗп сӗтел-пукан тунӑ. Мускаври Кремль двореҫӗнчи сӗтел-пукана, сӑмахран, чӑваш юманӗнчен ӑсталанӑ.

Юман шывра, нӳрӗ вырӑнта ҫӗрменнине кура унран ҫӑл пури ярассӗ, чикмек лартассӗ. Вилнӗ ҫын тӑпри ҫинчи хӗресе те унран тунӑ, ӑна пӳрт никӗсне хывнӑ. Юманран ҫуна тупанӗ авнӑ, урапа тӗнелӗ, йывӑҫ сӳре, йывӑҫ кӗрепле, каткапичке, чӗрес, кисӗп, вут ҫурмалли тукмак, тылӑ, арӑм йывӑҫҫи тата ытти япала тунӑ. Юманран тунӑ паркет чи пахи шутланать. Юман ҫӑпанӗн сӗткенӗпе ачасем вӑрҫӑ ҫулӗсенче чернил вырӑнне усӑ курнӑ.

Юман вӑрӑран ӗрчет. Вӑрри - йӗкел. Ҫӗр ҫинче 450 тӗрлӗ юман ӳсет, пирӗн ҫӗршывра - 20 тӗрлӗ. Унӑн ҫӳллӗшӗ 40-50 метра ҫитет, вуллин диаметрӗ - 1-1,5 метр.

Юман хуппи тир тунӑ ҫӗрте кирлӗ паха чӗр тавар шутланать. Типӗтнӗ ҫамрӑк тураттине тата хуппине вӗретнӗ шывпа вар-хырӑм чирӗнчен - вар виттинчен сипленме усӑ курассӗ. Ҫав шыв шӑл-ҫӑвара тасатма та лайӑх.

Юман ҫирӗп пулсан та ачаш йывӑҫ: сивӗрен хӑрать. 1939-1940 ҫулсенчи шартлама сивӗ улма-ҫырла йывӑҫҫисене сахал мар пӗтернӗ, юмана та шӑнтса хӑртнӑ. Ҫитмӗлмӗш ҫул-



сенчи сивĕ те сахал мар хĕн кăтартрĕ юманпа улма-çырла йывăçсисене. Хурт-кăпшанкă пĕтерме сапнă им-çам та юмана чылай хавшатрĕ. Халĕ чăваш юманĕ хăрать, вуçех пĕтесрен те хăрататать.

Юлашки çичĕ çул юман çинче йĕкел кураймарăмăр. Пĕлтĕрхи çимĕçĕ-вăрри начар мар пулчĕ. Çакă чăваш вăрманĕнчи юманлăха çăлса хăварма, ăна чĕрĕллĕх тымарĕ пама шантарать.



## *ХЫР*

Хырлăх та хăйне май илемлĕ. Çĕр-çĕр çул ӳснĕ хырлăха пырса кĕрсен, çӳллĕ ватă йывăçсем умра та хыçра е пуç тăрринче вăрăм çурта пек курăнаççĕ. Кунти çĕр пĕлтĕр тăкăннă лăсăпа хупланнă. Хыр хăйăрлă, акшарлă, торфлă-шурлăхлă вырăнта ӳсме юратнине нумайăшĕ пĕлет ĕнтĕ. Унăн тымарĕсем çирĕп, тарăна каяççĕ, айккинчи тымарĕсем çĕр питĕнче эрешмен карти пек каркаланаççĕ. Çӳллĕ мар тĕмескесем шурă-кăвак мăкпа хупланнă. Çак тăрăхра унта-кунта çĕр çумĕнчен хăпайман кĕтмел симĕс çулçисене асăрхатăн. Хырлăхра самай тĕттĕм. Хĕвел пайăркисем çӳле-çӳле çĕкленнĕ йывăçсен симĕс лăсси витĕр шăтарса тухса сарă хупăллă вулă çинчен вулă çине сиксе çĕре тăрăнаççĕ. Сывлăхшăн усăллă сухăр тата хăйне евĕр çĕр шăрши сăмсана кăтăклать. Вăл уйрăмах ӳпке чирĕпе аптракансемшĕн лайăх. Çавăн пек вырăнсенче санаторисем тăваççĕ. Хырлăхра шăп. Вăхăтран-вăхăт пăчăр çунаттисене шаплаттарса сывлăша çĕкленнине е çул урлă улатакка вĕçсе иртнине илтетĕн.

Хырлăх та сахаллансах пырать, ытларах ватă хырсем ӳсекен лаптăксем çеç тăрса юлнă. 30-40 çул каялла лартнă е халĕ çитĕнекен çамрăк йывăçсем çумĕнче юмахри чăн-чăн улăп пек туйăнаççĕ вĕсем. Хырлăхра кĕтмел тата хура çырла, мăнтăр туналлă шурă кăмпа, масла кăмпа ăнать. Унта та кунта яка кăмпан шупка хĕрлĕ калпакĕ курăнать. Çӳллĕ ватă хырсем тăррине çăткăн хурчкапа ăмăрткайăк йăва çавăраççĕ.

Çĕр çинче çĕр тĕрлĕ хыр ӳсет, пирĕн çĕршывра - вун икĕ тĕрлĕ. Вăл çутта юрататъ. Хыр 20-40 метр çӳллĕш ӳсет. 75 метра çити ӳсни те пулнă. Хыр 300-350 çул пурăнать. Вăл вăрăран ĕрчет. Вăрри - йĕкелре. Вăл 3-7 сантиметр тăршшĕ, çăмарта евĕр.

Çитĕнекен çамрăк хырлăхра та лайăх. Пĕр-пĕрне çывăх, тăчă ларса тухнă çамрăк йывăçсем яланах симĕс лăсăллă. Хыр та чăрăш пекех лăссине тăкать. Анчах вăл çын куçĕ сисиччен ӳссе те ларать. Çамрăк хырлăх сулхăнĕнче çуркунне тата çулла кăмпа шырамалла. Çуркунне кунта кăтра кăмпа, çулла хитре сарă хыр кăмпи çитĕнет.

Шурлăхра, торфлă вырăнта, лутра хыр ӳсет. Кун пек вырăна пырса кĕрсен, çемçе мăк тĕмескисем çийĕн михĕрен тăкăннă пăрçа пек вĕçĕ-хĕррисĕр хĕрлĕ шур çырли сарăлать. Çын пынине сиссе ура айĕнченех тейĕн шурлăхра пурăнакан шурă вăрман чăххисем сывлăша çĕкленеççĕ е йывăр карăк вĕçсе иртет.

Хыр çĕр çинче ӳсекен йывăçсенчен чи авалхисенчен пĕри. Вăл çулçăллă вăрмансем пуçланиччченех ĕрченĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ хыр йĕппипе çĕр çинчи тахçанхи кайăксенчен пĕри - карăк - тăранса пурăнать.

Çĕр çинче хыр анлă сарăлнă йывăç. Ăна Кавказ тăвĕсем çинче те, аякри сивĕ çурçĕрте те, тундра тăрăхĕнче те курма пулать. Пирĕн çĕршывра хыр мĕн пур вăрманăн 14 процентне йышăнать.

Хыр тĕшши паха, хаклă та çирĕп материал шутланать. Хыр пĕренинчен çурт купалаççĕ, хуралтăсем çĕклеççĕ, хăй вăхăтĕнче кĕперсем тунă, хыртан çурнă хăма та чи пахи.

Хыр - лайăх вутă. Унăн сухăрĕ паха чĕр тавар. Вăл тикĕт, сăмала, скипидар, тĕрлĕ эфир çăвĕ, канифоль тума каять. Хыр лăссинче С витамин нумай. Çавна май пăчкă çӳппинчен выльăхсене çитерме витаминлă хутăш хатĕрлеççĕ. Хыра, хăйăр çинче лайăх ӳснĕрен, хăйăрлă çырансене çирĕплетме, хăйăр вĕçтересрен чарма лартаççĕ. Хыр кедрĕ Урал тăрăхĕнче, Çĕпĕрте лайăх ӳсет.

Ватă хыр хăйне евĕр вилет. Тымар çинче ларса вилнĕ хырсене Уралта çарта пулнă чухне курма тӳр килнĕччĕ. Тăрри вăйлă çилпе хуçăлнă сухăрлă сарă хыр вулли ӳсекеннисен хушшинче мăн çурта пек çирĕп ларать. Вун-вун, çĕр-çĕр çул çапла ларма пултарать вăл. Туни вара мăкпа хупланать.

## УÇЛАНКĂРИ ПАЛАН

*Сăвви Юрий Сементерĕн* *Кĕвви Филипп Лукинăн*

Уçланкăри палан
Шап-шурă çурăлсан
Эпир сăмах татсаччĕ санпалан.
Кĕрхи кунсем çитсен,
Паланăмăр пиçсен
Эс таврăнма пулсаччĕ аякран.

Сана ăсатсанах
Тăм тиврĕ палана,
Шап-шур чечекĕ ӳкрĕ çĕр çине.
Çавна эс пĕлтĕн-ши,
Çавна эс сисрĕн-ши, -
Тăван яла килмерĕн кĕркунне.

Мана курсан ялан
Пуçне усать палан,
Туять пуль эпĕ саншăн çуннине.
Ан ман, савни, ан ман,
Халь хĕп-хĕрлех палан,
Пире кĕтсе упрать вăл çырлине.



## ЧĂРĂШ

Вăрманта çӳренĕ чухне шĕвĕр йĕплĕ яланах симĕссĕн çуталса ларакан çак йывăçа курман çын çуках. Типĕрех вырăна, çутта юратакан хырпа танлаштарсан, чăрăш ытларах айлăмрах, нӳрĕрех вырăна кăмăллать. Чăрăша лайăх çитĕнме тăмлă, хăйăрлă-тăмлă, нӳрĕкрех хăйăрлă тăпра меллĕ.

Чăрăш çӳллĕшĕ 20-50 метра, диаметрĕ - 1 метра çитет. Ирĕкре çитĕнекен йывăç 15 çулта, куçарса лартни 25-30 çулта вăрă пама тытăнать. Йĕкелĕ 10-15 сантиметр тăршшĕ. Чăрăш тымарĕ çĕр айне тарăнах каймасть, ытларах çиелте саланать. Вăл тĕттĕмлĕхрен, сивĕрен хăрамасть, анчах кĕркунне иртерех, çуркунне кая юлса килнĕ сивĕпе аптрама пултарать. Чăрăш 200-300 çул, хăшĕ-пĕри 500 çула çитиччен пурăнать. Чăрăшлăхри сулхăн вырăнта нумай курăк курăймастăн, кăмпа тупас шанчăк та çук. Çăра туратсем хушшинче кайăксем тăшманран е сивĕрен пытанаççĕ, пакшасем те "çурчĕсене" унта тума тăрăшаççĕ. Тарăн та ăшă йăвасенче кукăр сăмсасем хĕллехи шартлама сивĕре те чĕп кăларса çитĕнтереççĕ.

Чăрăш уйрăмах хĕлле, таса шурă юртан "çĕленĕ" йывăр çĕлĕкпе чухне илемлĕ. Сарлака тураттисем çинче хăмăр-кăвак йĕкел теттесем çакăнса тăраççĕ. Вĕсене кукăр сăмсасем çивĕч сăмсисемпе чакалаççĕ, вăррипе апатланаççĕ. Чăрăшлăхра упасем хĕл каçма шăтăк алтаççĕ. Кĕске хӳре мулкачсем те кунтах пытанма юратаççĕ: сивĕ хĕл те, тăшман куçĕ те хăратмасть.

Çынсемшĕн чăрăш хисеплĕ йывăç шутланать. Петĕр патша йĕркене кĕртнĕренпех çĕнĕ çула чăрăш тавра кĕтсе илес йăла çирĕп упранать. Чăрăш тавра уява пуçтарăннă ачасене Хĕл Мучипе Хĕл Пике Çĕнĕ çул парнипе сăйлаççĕ.

Чăрăш уйрăмах вăрманта, ирĕкре илемлĕ. Хĕллехи янкăр уяр каç тураттисем çинче юр çуталать. Мамăк юрпа витĕннĕ йывăç, уйăх тата çăлтăрсен çутипе юмахри илем-асамçăн туйăнать. Шурă Шупашкарăмăрăн Республика площадĕнчи чăрăшсем çине те куçа илмесĕр пăхатăн.

Хыр-чăрăшлăхра тата хутăш вăрмансенче пăчăрсем пурăнаççĕ, ывăнма пĕлми вĕлтĕртетсе вĕçсе çӳрекен пилеш кайăкĕсем йăва çавăраççĕ. Чăрăш йĕкелĕ нумай пулнă çулсенче кунта пакшасене те кăмăллă. Вăл турат çине хыçалти урисем çине ларса тата хӳрипе тĕрĕнсе малти урисемпе йĕкеле тытать, ăна кăмтăрт-кăмтăрт хырать, сухăрлă вăррине çăвара хыпать, хуппи ахахăн çĕре тăкăнать.

Чăрăш тĕшши шурă, çăмăл та çемçе. Унпа стройкăра, хут тата музыка инструменчĕсем тунă çĕрте усă кураççĕ. Чăрăш сухăрĕнчен тикĕт, скипидар, канифоль, йывăç уксусĕ, тир тумалли хуйăр хатĕрлеççĕ.

Чăрăша ытларах парксенче, чукун çулпа автомобиль çулĕ хĕррине лартса çитĕнтереççĕ. Вăрманта вара çуркуннехи çил пулса-пиçсе çитнĕ йĕкелрен çунатлă çăмăл вăрăсене хăйпăтса-уйăрса илет те айккинелле вĕçтерсе кайса сапалать. Чăрăшлăхпа юнашар çамрăк йывăçсем пуç кăлараççĕ. Вĕсем хăвăрт çитĕнеççĕ. Çак чăтлăхра çынна иртсе çӳреме те йывăр. Çамрăк йывăçсенчен пурте вăй илеймест. Вăйлăраххисем çеç, начаррисене хупласа, çӳлелле çĕкленеççĕ. Çĕнĕ чăрăшлăх ӳссе çитĕнет.



## ЛИСТВЕННИЦА - ЛИÇВАН

Лиçван - хыр-чăрăш йăхĕнчи йывăç. Пирĕн тăрăхра вăл ятарласа лартнипе çитĕнет. Республикăра ăна лартасси 50-60-мĕш çулсенче анлă сарăлнăччĕ. Лиственница 30-35 метр çӳллĕш ӳсет, хăвăрт çитĕнет. Хĕл ларас чух йĕпписене тăкать, çуркунне çĕнĕрен симĕсленет. Вĕсем вăрăм та çемçе, турат çинче çупкăмпа 20-40-ĕн ларса тухнă, хыр тата чăрăш йĕпписемпе танлаштарсан - лапчăкрах курăнаççĕ. Йĕкелĕсем - кĕске те çавракарах (çамрăккисем хĕрлĕ е симĕс тĕслĕ). Вĕсем вăрăм турат çинчи çамрăккин вĕçĕнче йĕпсен çупкăмĕ тăррине вырнаçнă. Вăрлăхĕ пĕр çултах пулса çитет. Уçăлнă йĕкелсем йывăç çинче 2-3 çул çакăнса тăраççĕ. Вăрăсем пĕчĕккĕ, çунатлă, çилпе вĕçсе саланаççĕ.

Лиçван ӳсекен вырăнта хĕлле те, çулла та илемлĕ, сăмсана сухăр шăрши кăтăклать. Çӳллĕ ӳснĕ йывăçсен айĕнче шĕшкĕпе икĕ виçĕ тĕрлĕ курăксăр пуçне урăх нимех те кураймастăн. Хыр кăмпи, сар е кăтра кăмпа тĕл пулма пулатех вара.

Лиҫван нимӗнле ҫӗре те тиркемест, ҫирӗп йывӑҫ. Ҫуттапитӗ юрататъ. Пирӗн ҫӗршывра вӑл Ҫурҫӗрте те, Инҫет Хӗвелтухӑҫӗнче те ӳсет. Пурӗ - 20 тӗрлӗ лиҫван. Ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинче вара лиҫван Гималай тӑрӑхӗнчен пуҫласа ҫурҫӗр широтин 71 градусне ҫитиех сарӑлнӑ.

Лиҫван йывӑҫӗ лайӑх авӑнать, ҫирӗп, хытӑ, час ҫӗрмест. Унпа шыв айӗнчи сооруженисем, карап тума усӑ кураҫҫӗ, сӗтел-пукан ӑсталаҫҫӗ. Лиҫван целлюлозӑпа хут, гидролиз производствин паха чӗр таварӗ. Вӑл чӗр сухӑр нумай паратъ. Унран скипидар, канифоль тӑваҫҫӗ. Йывӑҫ хуппипе тир-сӑран тунӑ ҫӗрте усӑ кураҫҫӗ. Лиҫвана илемлӗхшӗн пахчана, парка лартаҫҫӗ.





## ÇĂКА

Çӳллĕ симĕс çăкана ачаранах юрататăп. Чылайăшĕ ăна килти пахчана илемшĕн, чечекленнĕ чух шăрши пахишĕн, пыл хурчĕсем ытларах пыл пухчăр тесе лартнă. Игнатий Макарыч пахчинче, ял варринчи пĕве пуçĕнче, çырма хĕрринче, вун-вун метр çӳллĕш, мăн çын ытамĕ çитейми çăка ӳсетчĕ. Тавралла - хурăн та йăмра. Сарлака тураттисемпе çӳле-çӳле çĕкленнĕ йывăç ыттисен çумĕнче улăпла курăнатчĕ. Çăка Тимма Унтри, Уçăп Лазăрĕ пахчисенче çырма тăрăх ӳсетчĕ. Çуркунне çав пахчасенчи симĕс çăкасен тăрринче кайăксем - шăнкăрчсемпе пилеш кайăкĕсем шăхăратчĕç. Хĕвеллĕ кунсенче ылтăн тĕспе çиçекен саркайăк йывăç çинчен йывăç çине васкатчĕ, ватă çăкасен хăвăлĕсенче çерçи тăманисем йăва çавăратчĕç, çĕрле хăратакан сасăпа пĕр-пĕрне йыхăратчĕç. Хĕлле конькипе-тăрмалапа ярăнма тухсан, шурă пăр çине тăкăннă çăка вăррине пуçтарса çиеттĕмĕр.

Çăка 15-25 метра, хăшĕ-пĕри 40 метр çӳллĕшне çити ӳсет. Çитĕннĕ йывăçсен диаметрĕ 2-5 метр пулать. Пĕр çупкăм-

ра - 3-5 вăрă вырнаçать. Европăра сарăлнă çăкасем (Кавказ, Инçет Хĕвелтухăç, Амур çăкисем пулаççĕ) 500-1000 çул пурăнаççĕ. Пурĕ çĕр çинче 50 тĕрлĕ çăка, пирĕн çĕршывра 17 тĕрли сарăлнă. Çăка вăрăран тата тымар çинчи çамрăк хунавран ĕрчет.

Çăка çу пуçламăшĕнче ылтăн тĕслĕ чечекпе витĕнет. Ун чухне тавралăха пыл шăрши сарăлать. Нектар пуçтаракан хурт-хăмăр сĕрлевĕ шăплăхра аякранах илтĕнет. Сарлака тураттисем çинчи çулçисем çĕр питне хĕвелрен самаях хупласçĕ пулсан та çăка айĕнче тĕрлĕ курăк йăл илет, хурт-кăпшанкă кĕшĕлтетет. Уйрăмах уяр йышлă. Çу варринче йывăç айĕнче шурă кăмпа ĕрчет.

Чылай маларах ялан хитре, çӳллĕ çăка пур вăрманта та анлă сарăлнă йывăç пулнă. Шурă çăка тĕшши хаклă материал шутланнă. Халĕ те çавах. Ал ĕçĕ тума пĕлекенсем çемçе те çăмăл, тути тухман йывăçран кашăк-чашăк, чĕрес-витре ăсталанă. Çăкаран çурнă шурă хăмаран ывăс каснă. Çăка пĕренинчен купаланă çуртра çуралса ӳснĕрен ун ăшшине аван туятăп. Аттепе анне, çамрăк мăшăр, хыр-чăрăш пĕрени тупайманран çăкаран пура пуралаттарнă, типĕтсе мăк çине лартнă. Çав çуртра çичĕ ача çуралса ӳснĕ, анлă пурнăç çулĕ çине тухнă. Эпĕ вунпĕр тултарсан, çĕнĕ çурта куçсан, киввинчен вите тунă. Вăл паян та тăн-тăн ларать.

Вата çăка хуппинчен кăшкар, пĕчĕк урапа кӳми, пĕрне, такмак, пурак-кунтăк тунă, шывра ислетсе курăс чĕрнĕ, унран чăпта çапнă, мунчала тунă. Хунав хуппи пушăта кайнă, унтан çăпата хуçнă. Пушăта кайран валли те хатĕрленĕ. Пирĕн вăрмансенче халĕ пысăк çăкасене тĕл пулаймастăн. Урал леш енчи тайгара вара йышлăччĕ вĕсем.

Çăка чăнахах çын кăмăлне хаваслăх кӳрекен йывăç. Çăка пылĕ те авалтанах чи пахи шутланнă. Йĕрлĕ-йĕрлĕ çулçи çемçе, илемлĕ. Ăна путек-сурăх кăмăллать. Çăка кĕркунне çулçине ытти йывăçсенчен чылай маларах тăкать. Типнĕ сарă çулçă ура айĕнче çемçен кăштăртатать. 35733-чув.

Çăкана халĕ хула урамĕсемпе паркĕсенче йышлă лар-

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

taççĕ. Вăл тăпра пахалăхне пăхмасăр хăвăрт вăй илет, çитĕнет. Авă Шупашкарта та мĕн чухлĕ вĕсем! Çулла йывăçсен сип-симĕс çулçисем шавлă хула урамне илем кÿреççĕ, ĕçре ĕшеннĕ çынсен куçĕсене савăнтараççĕ.





## ĂВĂС

Ăвăс вăрмансенче анлă сарăлнă йывăç. Яштака та çӳллĕскер, вăл пурне те хăй илемĕпе тыткăнлать. Эпĕ ача чухне пирĕн улма-çырла пахчинче хăйне евĕр - йӳçĕрех те тăмăска çимĕçлĕ икĕ улмуççи пурччĕ. Вĕсем ăвăс çине сыпнăскерсемччĕ. Çак йывăç типĕ çанталăкра та парăнманнине кура ун çине улмуççи сыпнă пулнă ёнтĕ. Улмине, ытти йывăçсем çинчи пан улмипе танлаштарсан, выльăхсем юратса çиетчĕç.

Ăвăс хăвăрт ёрчекен тата ӳсекен йывăç. Вăл çулçисем тухиччен чечеке ларать. Чечекĕ вăрăм хăлха çакки евĕрлĕ, тăршшĕ - 4-15 сантиметр. Вăрри - пĕчĕк ещĕкре. Ăвăс 35 метр çӳллĕш, диаметрĕ пĕр метра çити ӳсет, 80-100 çул пурăнать. Ăвăс кăмпа чирĕпе аптрать. Хыр-чăрăш, юман вăрманĕсенче ăна хыт-хура пек çеç шутлаççĕ. Ăвăс пахчасенче те хăвăрт ёрчет, вăрман каснă е çуннă вырăнта хăвăрт шăтса тухать. Çулçи хăйне евĕр пулнăран, лăпкă çилпех çатăлтатса ларать.

Ăвăслăх уйрăмах кĕркунне, уяр кунсенче илемлĕ. Çулçисем çутă хăмăр, хура хĕрлĕ тĕспе сăрланаççĕ. Вĕсем тăкăнса çĕре хăйне евĕр "шăналăкпа" витеççĕ. Унта та кунта кая юлса шăтса тухнă ăвăс кăмпи тĕл пулать. Тĕрлĕ тĕслĕ çулçă айĕнчен кĕркуннехи чечексен тăррисем кăнтараççĕ.

Ăвăслăх хĕлле те илемлĕ. Хуран курăнакан хыр, чăрăш, юман çумĕнче йывăçăн шупкарах симĕс вулли аякран курăнать, çара тураттисем эрешмен картилле карăннă. Çакна курма, ăнланма çеç пĕлмелле.

Ватă ăвăс хăвăлĕнче тĕрлĕ кайăк йăва çавăрать, унтах йăкăл-йăкăл пакша иленет, хĕлле валли хатĕрленĕ апатсимĕçе пытарать. Пысăк пĕренесенчен, йывăç çемçине тата типсен çăмăллине кура, пĕр-ик çын ларса çÿремелли кимĕ чавнă, валашка, ещĕк тунă. Типĕ ăвăсран пуралани çуртхуралтă та çирĕп. Анчах каскаланă чухне пули-пулми пуртă витместь вара. Эпир те ăвăсран 30 çула яхăн каялла вите тунă, халĕ те ним мар ларать, шĕкĕ çеç хăвăрт тапăнать. Ăвăс тĕшши сарăрах шурă тĕслĕ. Вăл шăрпăк, хут тунă çĕре каять.

Çамрăк ăвăс хуппине мулкач юрататать, йÿçĕ хупăна пăшипăлан та кăмăлласа хырать-сĕвет. Çуркунне тата кĕркунне ăвăслăхра час-часах карăк тĕл пулатăн. Çулла кунта çÿллĕ туналлă хурăн кăмпи, ăвăс кăмпи, яка кăмпа ÿсет. Ура айĕнченех тейĕн, мулкач чупса тарать. Ăвăслăхра хурăн та яштака çитĕнет. Çак хутăш вăрманта вара кăмпи те, çырли те нумай. Кайăксем те юратаççĕ ăна.





## *ХУРӐН*

Ҫӗр ҫинче мана хамӑр тӑрӑхра ӳсекен хурӑнсенчен хитре йывӑҫ урӑх ҫуккӑ пек туйӑнать. Шурӑ е пӑч-пӑч хурарах-хӑмӑртарах тӗс ҫапнӑ хупӑллӑ хурӑнлӑх шурӑ е тӗрӗллӗ катан пир тӑхӑннӑ хӗрсемпе каччӑсен вӑйӑ картине аса илтерет, ирӗксӗрех ҫамрӑклӑх кунӗсем куҫ умне тухса тӑраҫҫӗ. Ыттисенчен уйрӑмрах е ҫырма-ҫатрара, пахча тулашӗнче пӗччен ӳсекен хурӑн вара ҫамрӑксен йышӗнчен тӑрса юлнӑ, хуйӑх пуснӑ хӗр е каччӑ пек туйӑнать. Ӑна пырса ыталаса-ачашласа тунсӑхне пусарас шухӑш ҫуралать.

Ҫутӑ та таса курӑнать хурӑнлӑх. Ҫуркунне вӑрманта юр кайса пӗтсенех, тавралӑха тутлӑ шӑршӑ саракан папак сарӑлать. Ӑнсӑртран хуҫӑлнӑ туратран пур чӗр чуна та вӑй кӳрекен сӗткен тумлать. Ӑна тӗрлӗ кайӑк ас тивме тӑрӑшать. Хурӑнлӑхра тӑван тӑрӑха таврӑннӑ кайӑксен сасси кӑмӑлтуйӑма хавхалану кӳрет: пилеш кайӑкӗ, куккук, ывӑнма пӗлмен ҫерҫи йывӑҫ ҫинчен йывӑҫ ҫине куҫаҫҫӗ. Ӗнер-паян шӑтса тухнӑ ҫеҫпӗл тӗрӗллӗ кавир евӗр курӑнать.

Хурăн çулçăллă йывăççен йăхĕнчен. Çулçи вĕтĕрех те хăйне евĕр илемлĕ. Йĕкĕрешсе тухакан чечекĕ çамрăк турат çинче алкан çакăнса тăрать. Хурăн пирĕн çĕршывра пур çĕрте те тĕл пулать. Ытларах вăл Европа пайĕнче, Хĕвеланăç Çĕпĕрте, Байкал тăрăхĕнче, Алтайпа Кавказра анлă сарăлнă. Хурăн 25 метра çити е çӳлерех те ӳсет, диаметрĕ 80 сантиметр таран пулать. Вăл тĕрлĕ минераллă тăварпа пуян çĕртен те, типĕ çанталăкран та хăрамасть, 150 çул е ытларах та пурăнать, хутăш вăрманта та, хыр-чăрăшпа юнашар та ӳсет. Йăлăмра, Хĕвеланăç Çĕпĕрте пысăк лаптăклă хурăнлăх та тĕл пулатăн. Пирĕн çĕршывра хурăн вăрманĕсем 80 миллион гектар, е мĕн пур вăрмансен 12 процентне йышăнаççĕ.

Çут çанталăкра хăйне евĕр кун - хурăн çулçи сарăлма тытăнакан кун пур. Çав кун хурăнлăха пырса кĕрсен, е пĕрпĕр пахчара ӳсекен хурăнсем патне пырса тăрсан, мăнтăр папкасем çурăлса çамрăк çулçă тăррине кăнтарма пуçласан, тавралăха симĕс тĕтре карса илнине куратăн. Ăна пуç таймасăр чăтаймастăнах. Хурăн катинче сарăлнă хăйне евĕр шăршă чун-кăмăла çĕклет. Çакă ĕнтĕ вăл çут çанталăк чĕрĕлĕвĕн палли! Пĕр-икĕ кунтан хурăнсем çăра симĕс çулçăпа хупланаççĕ.

Çуллахи вĕри çанталăкра хурăнлăхра çӳреме мĕне тăрать тата! Ăшă çил пуç тăрринче симĕс çулçăсемпе вылять. Хальхаль шăтса тухнă кăмпа тата пиççе çитнĕ тулăх çĕр çырли шăрши пурак хăвăрт туласса систерет. Хĕвел пайăрки, çăра çулçă хушшинчен шăтарса тухса, куçа шартарать. Çак тӳлек çанталăкра çемçе курăк çине тӳнсе кайса уçă, таса сывлăшпа сывлас та сывлас, çурăм çине выртса янкăр таса кăвак пĕлĕте куç илмесĕр сăнас та сăнас килет. Акă çӳлтеçӳлте таçтан шуса тухнă шурă пĕлĕт татăкĕ шурă акăш кĕтĕвне аса илтерсе шуса иртрĕ...

Кĕркунне те хурăнлăхра хăйне евĕр илем: йывăççем çăтăл-çăтăл ылтăн çулçăпа витĕннĕ. Вĕсем вăхăт юхăмне парăнса туратран татăлаççĕ те вĕлтĕртете-вĕлтĕртете сарăхма пуçланă курăк çине лăпкăн анса выртаççĕ. Таса, уçă вăрманти сывлăш: кăшт пĕчĕк сас-чĕв те илтĕнет кунта.



Хурăн - чылай-чылай юмахпа халăх юррисен геройĕ. Кашни сăвăç-юрăç унпа йăпанма тăрăшать. Çакă, тен, мунчара шăм-шака хурăн милĕкĕпе ăшăтса сипленинчен те килет пуль. Юман милĕкрен çемçе те ачаш вăл, усси вара питех те пысăк. Уявсенче хĕрсем çамрăк симĕс хурăн тураттипе вăййа тăнă, хурăн тавра вăйă картисене пуçтараннă. Хурăна хитришĕн аслă çул хĕррине лартнă, лартаççĕ те. Шупашкар - Канаш автомобиль çулĕпе чукун çула та хурăн илем кӳрет.

Хурăн папкинче 3,5-6 процента яхăн эфир çăвĕсем. Папкине вĕретнĕ шывпа пӳре-пĕвер чирĕсенчен, шăмă сыпписем ыратнинчен сипленеççĕ.

Хурăн хуппинчен кăшкар тунă, Çурçĕрте пурăнакансем çемçе хурăн хуппинчен çăпата хуçнă, апат, кĕпе-тумтир илсе çӳреме хутаç-карçинкка çыхнă. Хупăран тикĕт юхтараççĕ. Хурăн тĕш-йывăçĕ сĕтел-пукан, фанера, паркет тума каять. Хурăн тĕшши çирĕп пек курăнсан та хуппине сӳмен йывăç çулталăкранах хупăран "тухса тарать", çĕрсе каять. Хурăн вутăра та лайăх, ăшши техĕмлĕ.



## *ХУРАМА*

Хурама та халă ра йăмра пекех "лаштра" эпитета тивĕçнĕ. Вăл йĕлме-хурама к хĕнчи йывăç. Авалхи вăрмансенчен уй-уй варрине тăрса юлнă е каярах шăтса тухнă уйрăммăн ларакан хурамасем тураттисене чăн-чăнах ирĕке ярса ларатчĕç. Ача чухне вĕсен тĕлĕнчен иртсе çӳренĕ чухне (Тутарлари тăвансем патне каякан çул çинче армак-чармак туратлă хурамасем, вĕсем Шурка çĕрĕ çинче тата Пĕчĕк Кăнаш çăви çинче пурччĕ), чуна самаях шиклентеретчĕç, куç умне Михаил Федоровăн "Арçури" балладинчи сăнарсем тухса тăратчĕç.

Хурама хутăш вăрманта ӳсет. Хурамалăх темелĕх пĕр вырăнта йышлă ӳснĕ хурамана курма тӳр килмен мана. Пахча-хурара, аслă çулсем хĕрринче шăтса тухать вăл, вăрăран ĕрчет. Хурама çуркунне ир-ирех, çулçи шăтса тухиччен чечеке ларать. Вăрри çавра лаптак "арчара" çитĕнет. Пирĕн тăрăхра ытларах "яка хурама" текенни сарăлнă. Вăл 35 метр çӳллĕшне çити ӳсет, диаметрĕ пĕр метр ытла пулать. Ăна

юхан шывсен, кӳлӗсен хӗрринче куратӑн. Вӑл Ҫурҫӗрти тайгара та ӳсет е ҫурҫӗр широтин 63 градусне ҫити сарӑлать. Хурама нумай ҫӗр ҫул пурӑнать, сивӗрен хӑрамасть, ҫӗр пулӑхлӑ тата нӳрӗрех пулнине юрататъ. Хурамана хула урамӗсене те лартаҫҫӗ.

Хурама тӗшши сарӑрах шурӑ тӗслӗ. Вӑл ҫирӗп, хӑвӑрт хуҫӑлман йывӑҫ: чӗрпеленменнине, патрак маррине кура унран пуртӑ-мӑлатук аври ӑсталаҫҫӗ, пӗкӗ аваҫҫӗ, ҫуна, урапа хурами, катка-пичке кӑшӑлӗ тӑваҫҫӗ. Хурама хуппи ҫирӗп курӑс парать, унӑн сӗткенӗ техника ҫӑвӗ тума каять.

Хурама - стройкӑра кирлӗ питех те ҫирӗп йывӑҫ. Унпа сӗтел-пукан промышленноҫӗнче анлӑ усӑ кураҫҫӗ. Ватӑ хурама хӑвӑлӗ нумай-нумай чӗр чуншӑн паха ҫурт шутланать.

Вӗтӗрех ҫулҫӑллӑ хурама 27 метр ҫӳллӗш ӳсме пултарать. Вӑл хӑвӑрт ҫитӗнет, тӑварлӑ ҫӗртен, типӗ ҫанталӑкран хӑрамасть. Ӑна ытларах Ӑзири типӗ районсенче, Кӑнтӑр Европӑра, Ҫурҫӗр Америкӑра, Аргентинӑра курма пулать.

Шултра вӑрӑллӑ лутра ӳсекен хурама та пур. Вӑл ытларах Вӑтам Азире, Кавказ леш енче, Инҫет Хӗвелтухӑҫӗнче, Монголире, Китайра, Корея ҫур утравӗ ҫинче сарӑлнӑ, ҫак хурама тымартан хунав ярса та ӗрчет, сӑртлӑ-туллӑ вырӑнта, сӑртран юхакан шывсем хӗрринче ӳсет. Ӑна, тымаррисем ҫирӗп пулнине кура, ҫӗр ишӗлекен вырӑнсене лартаҫҫӗ.



## ТИРЕК

Тирек халăхра тополь ятпах çӳрет. Вăл йăмрасен çемйинчен. Çак симĕс хупăллă йывăç çулла шурă мамăкĕпе вăрманти уçланкăсене, хула урамĕсене, скверсемпе парксене шурă шупăр пĕркентерет. Унăн çӳллĕшĕ 40-45 метр, вуллин диаметрĕ - пĕр метр е ытларах та пулать. Вăл туратне касса лартса та, тымартан хунав кăларса та, вăрăран та ĕрчет. Тирекĕн çулçисем тĕрлĕ формăллă пулаççĕ. Чечекки чечек хĕвĕнче вăй илет. Кăчкисем шăпăр-шăпăр ярăмăн çакăнса тăраççĕ, çулçă тухиччен вăй илеççĕ. Йывăç папки мăнтăрланса çитсе çулçă тухнă вăхăтра тавралăха тутлă шăршă сарăлать, алла илнĕ сар сухăрлă папак çилĕм сĕрнĕн пӳрнесем çумне çыпăçать. Хитре-çке çав вăхăтра тирек! Хăй патне туртать-йыхăрать вăл! Чечексем лăпкă çилпех шăркаланаççĕ. Пулса çитнĕ вăрри вĕтĕ-вĕтĕ мамăклă арчара çилпе тавралăха саланать. Çавăн чухне ĕнтĕ тирек çĕр питне шур мамăкпа витет.

Вăрманçăсенчен пĕрисем station калана тăрăх çĕр çинче 100 тĕр-

лĕ, теприсем ĕнентернĕ тăрăх - 35-40 тĕрлĕ тирек ӳсет. Тирек çĕр чăмăрĕн Çурçĕр пайĕн çурринчен тытăнса Танганьика, Уганда тата Çурçĕр Мексика таранах сарăлнă. Пирĕн çĕршывра 30 тĕрлĕ тирек ӳсет, вун икĕ тĕрли ытти çĕртен куçарса килнисем.

Тиреке ытларах илемшĕн лартса çитĕнтереççĕ. Вăл хăвăрт ӳсет, тăпра пахалăхне питех тиркемест, пирĕн тăрăхри вăрманта вăй илнĕ. Бальзам, шурă, тутлă шăршăллă тата ытти тĕрлĕ тиреке лартса çитĕнтерме тăрăшаççĕ. Конус, пирамида евĕрли республика тĕп хулин урамĕсенче те çирĕп тымар ярать.

Тирек тĕшши шурă, çăмăл, çемçе. Унран тĕрлĕ япала касса кăларма аван. Тирекпе шăрпăк, хут тунă çĕрте усă кураççĕ, унран фанер хатĕрлеççĕ, хăминчен ешĕк çапаççĕ.

## ПИÇЕТ ПИЛЕШ, ПИÇЕТ ПАЛАН

*Сăвви Василий Энтипĕн Кĕвви Юрий Кудаковăн*

Пиçет пилеш, пиçет палан -
Кĕр хĕрелет хĕрле.
Вĕçеççĕ кайăксем паян -
Пухăнчĕç пĕрле.

Пире анчах, пире анчах
Пит йывăр пĕрлешме.
Эс те ачаш, эп те ачаш -
Хĕн-шим килĕшме?..

Те эс пĕччен, те эп пĕччен?
Тĕл пулас çук тепре.
Çурхи илем - хура кĕрччен,
Тунсăх - ĕмĕре...

Пиçет пилеш, пиçет палан -
Кĕр хĕрелет хĕрле.
Пĕрлешнĕ кайăксем паян
Вĕçрĕç çӳлелле.



# ВĔРЕНЕ

Вĕрене хутăш вăрманта, хурăнпа, ăвăспа, юманпа, çирĕкпе юнашар ÿсме юрататъ. Унăн лап-лап сарлака çулçи аякран курăнать, вулли таса та яка. Çак тарана çитсе пĕр вырăнта вĕрене йышлăн ÿснине курма тÿр килмен. Кукам йăмăкĕн пахчинче шăтса тухнă вĕрене ватăличченех пурăнчĕ. Эпир, вĕтĕр-шакăр, çунатлă вăрă хуппине вăрри пулса çитсен "арчинчен" кăларатттăмăр та "çунатне" сăмса çине лартса кайăк пулса вылятттăмăр. Тĕлĕнмелле вăхăт!

Çапла вĕрене вăрăран ĕрчет. Вăл мăшăрлă çитĕнет, пулса çитсен, çунаттисем пулăшнипе, урăх çĕре вĕçсе ÿкет, тăпри меллĕ пулсан тепĕр çул çамрăк йывăç шăтса тухать.

Çĕр çинче 150 яхăн тĕрлĕ вĕрене теççĕ. Вăл Европăра, Азипе Африкăра та, Америка континенчĕн Çурçĕр тата Вăтам тăрăхĕнче те ÿсет. Пирĕн çĕршывра 29 тĕрлĕ вĕрене тымар янă. Ăна Европа пайĕнче, Инçет Хĕвелтухăçĕнче, Вăтам Азире курма пулать. Пирĕн енче ытларах вара тăвата тĕрли: шĕвĕр çулçăлли, уйри, тутар тата америка вĕрени текеннисем анлăрах сарăлнă.

Шěвěр те лапсака çулçăллă вěрене чăвашра йăл янă. Вăл 30 метр çўллěшне çити ўсме пултарать, вуллин диаметрě пěр метра çити сарăлать, сулхăнран, сивěрен хăрамасть. Унăн тěшши çирěп, вăр-вар авăнмасть. Тураттти те çирěп, хивре, пружина пек авăнать. Ача чухне вěрене хулли вěçне тăм чăмаккаласа лартаттăмăр та ăна, хулă пулăшнипе, аякка вěçтереттěмěр. Пирěн "снаряд" 30-50 метра кайса ўкетчě.

Çуллахи вěри çанталăкра çула тухсан, е вăрманта сарлака çулçăллă вěрене курсан, ун айне ларса канмасăр сайра иртетěн. Кунта сывлăш шăрши те, ўсекен чечеккисем те урăхларах. Хěвелпе ăшăннă çěр çинче кăткăсем унталлакунталла кумаççě, тăрăшсах ěçлеççě.

Вěренене парксенче, кўлěсемпе пěвесем хěррине лартаççě. Вăл уйрăмах кěркунне хăйне евěр илемлěхпе савăнтарать. Тěксěм хěрлě е ылтăн тěслě çулçăсем хěвел питěнче хăйне евěр тěспе çиçеççě, кăмăла çěклеççě. Ахальтен мар çěр çинче выртакан тěрлě йывăç çулçисенчен чи малтан вěрене çулçине алла илетпěр, ăна киле-хваттере илсе килсе ялан куç тěлпулмалли вырăна лартатпăр. Уяв, савăнăç кўрет вăл чуна.

Вěрене чечекре чухне ун çинче хурт-хăмăр сěрлет. Сахал мар нектар парать вăл. Ара, сěткенěнче сахăр 2-5 процента яхăн-çке-ха. Вěренерен сěтел-пукан, музыка инструменчěсем тăваççě.

Америка вěрени текенни пирěн тăрăхра та лайăх ўсет, типě çанталăкра та аптрамасть. Анчах ăна çум вырăнне хурса часах касса тăкаççě. Вăл лайăх çунать, ăшă парать.



## ЙĂМРА-ÇӲÇЕ-ХĂВА

Йăмра чăваш çĕрне уйрăмах юрататъ тейĕн. Чăвашри çĕр-çĕр яла илем кӳрет вăл, юрăра та янăрать.

Çĕр пулăхне питех уяман çак йывăç вăрмансенчи пĕчĕк юхан шывсемпе пĕве-кӳлĕсен çыранĕсенче, çырма-çатрара ӳсет. Чăваш ачисенчен çак çăмăл та ачаш йывăçа пĕлменни çук та. Йăмра пахчара та, çул-йĕр хĕрринче те çирĕп тымар янă. Ăна тамбăсене çирĕплетме, çырма-канава шыв-шур ытла çĕмĕресрен лартаççĕ. Çынсем йăмрана нумай тĕрлĕ ятпа пĕлеççĕ.

Çĕр çинче пурĕ 300 тĕрлĕ йăмра ӳсет, пирĕн çĕршывра - 120 тĕрлĕ. Йăмра-çӳçе çӳллĕ вулăллă йывăç. Хăва, хĕрлĕ хăва хулли тĕммĕн ӳсет. Çĕр çумĕнчен темиçе сантиметр çеç хăпса пысăк анлăшпа курăк пек ӳсекен йăмра-хăва та пур. Йăмра вăрăран та, хунавран та ĕрчет. Вуллине çĕр çумĕнчен пĕрер метр çӳллĕш каснă е лутрарах хăварнă йăмра та хунав кăларать, хăвăрт вăй илет. Йăмра вăрри кăчкинче, уйрăм курупкара çитĕнет. Чăрăш йĕппине аса илтерекен

çемçе йĕпсем ларса тухнă вăрă çилпе хăвăрт вĕçсе саланать. Унăн шăтаслăхĕ вара тăватă-пилĕк кунтанах пĕтет. Хăш-пĕр тĕрлĕ йăмра вăррин çеç шăтаслăхĕ тепĕр çулччен упранать.

Çӳллĕ вулăллă йăмра 30-40 метра çити ӳсет, диаметрĕ пĕр метр е ытларах та пулать.

Авă пирĕн ял варринчи чи ватă йăмран диаметрĕ (30-50-мĕш çулсенче ун çывăхĕнче трибуна пулнă) пĕр метр çурă та пулĕ. Вăл тахçантанпах хăвăл, хытă хуппи çинче çеç тытăнса тăрать, апла пулсан та çуллен сип-симĕс ешерет.

Çуркунне йăмра вулли-туратти тăрăх ытти йывăççеннинчен чылай маларах сĕткен "чупма" тытăнать. Йăмра чечеке ларать, сап-сарă мамăк кăчкă çине халь çеç вĕллерен вĕçсе тухнă хурт-хăмăр сырăнать. Кăчкă кĕçех çуркунне çитессе систерет. Çынсем ăна юратса-хисеплесе киле-хваттере илсе килеççĕ. Йăмра-хăва тĕмисене шăпчăк кăмăллать, унăн çурхи пĕрремĕш юрри унта янăрать. Çил ачисем те йăмра çулçисемпе выляма килĕштереççĕ. Ир-ирех вăраннă пулăçсем те çыранти йăмра çумне йăпшăнаççĕ. Хĕвел çуттинче пинпин çулçипе таса шыв çийĕн тĕрĕ тĕрлекен йăмра тавралăха хăйне евĕр илем кӳрет-çке-ха. Хĕвелĕ çӳлерех хăпарсан, унран та хӳтĕлет. Витререн тăкнă пек çумăр лӳшкеме тытăнсан тата йăмра сана тӳрех йĕпенме памасть. Пĕвинчекӳллинче карасĕ те, уланки те, кăртăшĕ те, партасĕ те хӳре çапсах ишеççĕ, ăманне хыпмаççĕ.

Йăмра тĕшши çăмăл та çемçе, хăвăрт çĕрет. Типпĕ йăмра тĕшши çурăлманнине кура, çынсем унран валашка, такана чавнă, кункăра тунă. Килте атте ăсталанă валашка халĕ те пурăнать. Йăмраранах кукăр тупан, тăрмала, йĕлтĕр те тунă. Хăваран вара лăпă, кăрман, сĕтел-пукан çыхнă. Йăмра пĕкки те çирĕп пулнă. Вăрман çук тăрăхра унпа стройкăра та усă кураççĕ.

Йăмра çулçине хĕлле качакасемпе сурăхсем юратса çиеççĕ. Чылай йăмра, сăмахран, сăрă, шурă йăмра хуппипе

тир-сăран тунă çĕрте тимлеççĕ. Хăшĕ-пĕрин хуппи çинче тĕрлĕ эмел тума каякан гликозид, салицин пур.

Тĕрлĕ çĕрте ўсекен кахăр çўçе, хĕрлĕ çўçе, шурă çўçе, çўçе тĕмĕ тата ытти тĕрлĕ йăмра этемĕн кулленхи пурнăçне илемлетет, пуянлатать.





## ÇИРĔК

Çирĕк хурăн йăхĕнчи йывăç. Вăл ытларах çĕр чăмăрĕн çурçĕр пайне юрататъ. Пурĕ 47 тĕрлĕ, пирĕн çĕршывра вун пилĕк тĕрлĕ çирĕк ÿсет. Пур тĕрлĕ çирĕк те çуркунне чи малтан чечеке ларакан йывăç шутланать. Ун чухне вĕсен çулçи те тухмасть-ха. Чечекĕ вăрăм алкара. Тулса çитнĕ вăрри - икĕ çунатлă пĕчĕк мăйăрта. Уçă вырăнта вăл мăйăрне 8-10 çултан пама тытăнать, вăрманта - 30-40 çултан. Йывăç-сенчен ытларах пайĕ 100 çул ÿсет, 300 çул ÿснĕ тĕслĕх те пулнă. Çирĕк вăрăран, йывăç кутĕнчен, тымартан хунав тухса та ĕрчет. Вăл ытларах юхан шывсен çыранĕнче, нÿрĕ-пе пуян тăпра çинче ÿсет, хăш-пĕр тĕрлисем (япун е китай çирĕкĕ текеннисем) чуллă-хăйăрлă вырăнта та хăйсене лайăх туяççĕ.

Хăшĕ-пĕри темшĕн çирĕке юратсах каймасть. Вăрманта ăна çум курăк вырăнне хураççĕ. Çирĕк курăк туса илме, сухалама-акма пăрахнă улăха, уя хăвăрт çавăрса илет, унти çĕре нÿрĕклетсе ярать. Çавăнта вара вăрăм туна, ÿпре-шăна, ытти хурт-кăпшанкă ĕрчесе каять.

Ирĕкре ҫитĕнекен ҫирĕкре чун-кăмăла килекен хăйне евĕр илем те пур. Вăрмансенчи пĕчĕк кӳлĕсемпе юхан шывсен нӳрĕ ҫыранĕсенче ӳсекен хăйне евĕр ҫирĕке хура ҫирĕк теҫҫĕ. Вулăпа ҫирĕп ҫыхăннă тĕреклĕ туратсем пĕлĕтелле кармашаҫҫĕ. Ҫитĕннĕ йывăҫ ҫӳллĕшĕ 30 метртан та иртет. Ҫулҫи те унăн хура симĕс тĕслĕ, ҫилĕмлĕ. Урлă-пирлĕ хĕресленнĕ тымарĕ ҫĕр айĕнчен мăкăрăлса тухнă. Вăрттăн вырăнта, ҫавăн евĕр йывăҫ айĕнче хăнтăрсем йăва ҫавăрма юратаҫҫĕ. Хура ҫирĕкĕн мăнтăр та тӳрĕ вуллинчен хулăн хăма ҫурнă. Ăстасем унран чĕнтĕрлĕ те тĕрĕллĕ сĕтел-пукан, тĕрлĕ пысăкăш арча тунă. Халĕ хура ҫирĕке вăрманта сайра тĕл пулатăн.

Сăрă е шурă ҫирĕк те пысăк анлăша хăвăрт ҫавăрса илет. Вăл пирĕн тăрăхри вăрмансенче те тĕл пулкалать. Пуклак пуҫлă ҫутă-симĕс тĕклĕ ҫулҫи хура ҫирĕкĕнни пек ҫыпăҫмасть. Ҫак ҫирĕк тăпра пахалăхне питех уямасть, типĕрех вырăнта та ӳсет, 20 метр ҫӳллĕшне ҫити ҫĕкленет, тымартан вăйлă ĕрчет. Унпа вутă вырăнне ҫеҫ усă кураҫҫĕ, ку енĕпе вăл хурăн вуттинчен ӳксе юлмасть. Вăл лайăх ҫунать, хĕрӳллĕ те. Ҫирĕк хуппи шывĕпе авал пир пĕветнĕ, унран хитре сараппансем ҫĕленĕ.

Шупка хăмăр, шупка кĕл тĕслĕ хупăллă, тĕммĕн ӳсекен ҫирĕксем те пур: вĕсем Японипе Китайра, Корея ҫурутравĕ ҫинче, пирĕн ҫĕршывра - Ҫĕпĕрте, Инҫет Хĕвелтухăҫĕнче ӳсеҫҫĕ.

Ҫирĕклĕхре мулкачсем пытанаҫҫĕ, пăчăрсем тăранса пурăнаҫҫĕ. Ватă ҫирĕк вуллине улатакка чакаласа йăва ҫавăрать. Ҫакăнтах ларма-тăма пĕлмен чакакĕ хăй йăвине пытарать, пилеш кайăкĕ тăрлатса юрласа ҫӳрет. Лайăх ҫулсенче унта вăрманта ҫитĕнекен хăмла ҫырли, мăк тĕмескисем хушшинче - хура ҫырла та тупатăн.

Ҫирĕк тĕшши шупка ҫутă, ҫăмăл. Ăна хĕвел питĕнче, ҫутăра хăвăрт шупка хĕрлĕ тĕс ҫапать. Унран сĕтел-пукан ăсталанипе пĕрлех тĕрлĕ ещĕк, фанера тăваҫҫĕ. Вăл ҫĕр айĕнчи тата шыври сооруженисене тунă ҫĕрте паха строительство материалĕ шутланать. Ҫирĕк хуппи танинпа пуян. Вăл вар-хырăм чирĕнчен сипленмелли эмел тума каять.



## ПИЛЕШ

Пирĕн тăрăхри пур вăрмансенче те ӳсекен çак çӳллĕ мар сапăр йывăç патне манăн хăйне евĕр туртăм, килĕшӳ, юрату. Лăпкă çилпех хумханакан темиçе пайран тăракан сарлака çулçи ăна ытти йывăçсенчен уйрăмрах кăтартать. Унра чылай çын кăмăлне çĕклеме-хавхалантарма пултаракан хăйне евĕр илем, вăй пур. Ахальтен мар пуль халăх е уйрăм çынсем хывнă чылай юрра пилеш çирĕп кĕрсе вырнаçнă. Мĕн авалран ăна илемшĕн пӳрт-çурт çумĕнчи-умĕнчи пĕчĕк пахчасене лартнă.

Пилеш çĕршывăн çурçĕр пайĕнче, çимĕç паракан улмуççи-груша ӳсмен вырăнта та ӳсет. Çĕр çинче пурĕ 50 тĕрлĕ, хăшĕ-пĕри çирĕплетнĕ тăрăх 100 тĕрлĕ пилеш çитĕнет. Унăн вулли таса та яка, хуппи хура хăмăр, йăлтăркка. Пилеш çуркунне ытти йывăçсенчен чылай каярах, вăрман симĕс тум тăхăнсан, уçланкăсенче, вăрманти юхан шывсен çыранĕсенче янкăр уçă сасăллă шăпчăксем юрă шăрантарма тытăнсан чечеке ларать. Чечекĕ аякран курăнман сăпар тĕс-

пе витённĕ. Çавăнпа ăна хуçса-татса йывăçа сăтăр тумаççĕ.

Çулла пилеш тураттисем çинче пысăк мар çырлаллă сапакасем хĕрелме тытăнаççĕ. Çуллахи хĕвел ăшшипе савăнса васкамасăр пиçет пилеш. Çу кунĕсенче вăл йÿçĕ, ăна çăвара та чикес килмест, кайăксем те сăхмаççĕ. Кĕркунне сарăхнă-хĕрелнĕ çулçăсем тăкăнса пĕтсен, малтанхи сивĕсем пуçлансан çеç тутă кĕрсе çитет пилеше. Вăл ун чухне хăйне евĕр квасак пылак. Аяларах хĕремесленсе ларакан пилеш патне пырса тăрса йăпанас, ачашланас кăмăл çуралать: пăхса тăранма çук ун çине.

Хĕлле пилеш çырлине пилеш кайăкĕсем çиеççĕ, хутранситрен уйăппа кăсăя та сăхкаласа пăхаççĕ. Сапака-сапака хĕрлĕ пилеш çырли шурă пĕркенчĕклĕ вăрманта чуна ăшă туйăм парать. Ун чухне кайăксем шĕкĕлченĕ çырла хуппи шурă юр çинче тепĕр сăтрăм юр çума тытăниччен пăнчăнпăнчăн курăнса выртать.

Кĕр вĕçленсе килнĕ чухне атте-анне, пичче-аппа шăнса хытма тытăннă хĕрлĕ сапакасене татса-хуçса виçшерĕн-тăватшарăн çыхса пÿрт маччине, сарайне çакатчĕç. Каярах татах шăннă çырлана пÿрте илсе кĕрсе ăшăтса çиеттĕмĕр. Хăйне евĕр паха тутăллă, шăршăллă вăл. Çавна пĕлсе-туйса халĕ те кашни çулах 10-20 сапака пилеш татса çакма манмастăп. Пилешрен хатĕрленĕ кăвасак варенине те кăмăллатăп. Хăшĕсем пилеше сапакипе сироплаççĕ.

Пилешпе апат-çимĕç пĕçернĕ, эрех тунă çĕрте, медицинăра усă кураççĕ.





## УЛМУÇÇИ

Хутăш вăрманта унта та кунта тĕл пулатăн çав вăрăм йĕплĕ йывăçа. Çимĕç паракан турачĕсем кĕске, çав хушăрах хулă пек вăрăм ӳссе кайнисем те пур. Тĕрлĕ улмуççин çулçи тĕрлĕ: тăсăклăрах е çавракарах, якарах е тĕклĕрех. Чечеке ларнă улмуççи симĕс тумлă йывăçсем хушшинче шурă шупăрлă хĕрарăм пек курăнать, тавралăха илем кӳрет. Чечек çинче хурт-хăмăрĕ хăйне валли апат пухать-сĕрлет, шăркасене пĕтĕçтерет. Çак вăхăтра йывăç çинче кайăксем те йышлă: хурт-кăпшанкă пуçтараççĕ. Улмуççи çимĕçĕ тытăнсан та илемлĕ. Хурт-кăпшанкă тапăнман улмуççин çимĕçĕ лайăх ӳсет, кĕске вăхăтра пулса çитет. Пан улмире вăрă çитĕнмелли пилĕк "пӳлĕм". Вĕсенче - икшер вăрă. Çĕр çинче 36 тĕрлĕ улмуççи çитĕнет, тепĕр ăсчахсем каланă тăрăх 150 та çитет. Этем лартса çитĕнтерекеннисем вара 10-12 тĕрлĕ. Хăйсен тĕллĕн ĕрчекен улмуççисем Воронеж, Курск облаçĕсенче, Кавказра, Крымра, Вăтам Азипе Çĕпĕрте анлă сарăлнă. Китайпа Монголире те, Çурçĕр Америкăпа Иранра та йышлă вĕсем.

Пан улми этемшĕн авалтанпах апат-çимĕç продукчĕ шутланать. Çавăнпа çын улмуççие тахçанах лартса ĕрчетет. Вăл çĕр пичĕн вăтам тăрăхри тата тропик тăрăхĕпе вăтам тăрăх хушшинчи зонăри, тропикăн сăртлă районĕсенчи çĕршывсенче те ӳсет. Пин-пин çул хушшинче çын улмуççи сортне лайăхлатса пырса вунă пине яхăна çитернĕ. Пирĕн тăрăхра хĕрлĕ анис, йăрăм-йăрăм тĕрĕллĕ анис, антоновка, ренет, шафраннăй пепин, мелба, сарă шнап, джонатан, ренет-китайка тата ытти сортсем лайăх вăй илеççĕ, тулăх çимĕç параççĕ.

Улмуççи пахчисем чечеке ларсан ял шурă пĕркенчĕк айне пулнăн туйăнать. Эпĕ ас тăвасса пирĕн 80-100 киллĕ ялта чылай çемьен улма-çырла пахчи пулнă. Пирĕн хамăрăн, сăмахран, пахчан виçĕ пайĕнчен пĕрне улмуççисем йышăнатчĕç. Пурĕ вун икĕ йывăçчĕ. Сарлака туратлă 20-30 çулхи улмуççисен çимĕçĕ тулăхчĕ. Тăкăннă пан улмине пуçтарса выльăха çитернĕ. Хĕлле валли нӳхрепре усранă, тăварланă та.

Улмуççи çĕр çула яхăн пурăнать, çимĕçне тулăх параканнисем - 70-50 çул. Вăрманта ӳсеканнисем 300 çула та çитеççĕ. Улмуççи 40-50 çул тулăх çимĕç парать. Вăл çуркунне каярах юлса, апрель-май уйăхĕсенче чечеке ларать. Шăркалăх вăхăчĕ 8-12 талăк тăсăлать. Йывăç çинчи мĕн пур чечекĕн 30 проценчĕ пĕтĕленсе çимĕç парать, уттисем тăкăнаççĕ. Июньте пан улми васкасах çитĕнме тытăнать. Улмуççи сивĕрен питех хăрамасть, тĕрлĕ тăпра çинче ӳсме пултарать, анчах тулăх çимĕç илес тесен, çĕре тулăх апатлантармалла.

Улмуççи çимĕç паракан чи паха йывăç. Пан улмири витаминсем çынна питех те кирлĕ. Çимĕçре 84-90 процент шыв, 5-15 - сахар-фруктоза, 0,37 пан улми йӳçекĕ, 0,11 - лимон йӳçекĕ, 1,2 - пектина, тĕрлĕ сухăр 0,27 процент. С витамин та пур. Пан улмине чĕрĕлле çинипе пĕрлех, унран варени, повидло, мармелад пĕçереççĕ, сĕткенне юхтараççĕ, унпа эрех тунă çĕрте усă кураççĕ, компотлăх тураса типĕтеççĕ. Пур сорт улмуççи те хурт-хăмăршăн лайăх, нектар нумай парать.



Улмуççи тĕшши тĕшĕ, çирĕп, лайăх касăлать тата якалать. Çавăнпа унран тĕрлĕ япала, пĕчĕккисем валли тетте хатĕрлеççĕ.

Улмуççи вăрăран ĕрчет. Тунаран та хунав тухать. Паха сортлă улмуççи пултăр тесен ăна çав сортсемпе сыпаççĕ. Куçарса лартма сыпнă хыççăн икĕ çул ўсни аван. Кĕркунне лартса хăварни хăвăртрах вăй илет. Анчах ăна хĕлле шăнма памалла мар, тавраллa юр купаласах тăмалла.

Улмуççие хурт-кăпшанкăран та сыхлама пĕлмелле. Вĕсем вара йышлă: чечекне çиекенни, çимĕçне çиекенни, улмуççи шĕкки, улмуççи пыйти тата ытти те. Чирĕ те сахал мар: кўтăр, хура рак, çимĕçе çĕртекенни т. ыт. те.

Улмуççие, сыхласа çитерейменсен, мулкачсем, шăшисемпе йĕке хўресем сиен кўреççĕ, шуратичченех кăшлаççĕ, йывăça хăртаççĕ.





## ПАЛАН

Вăрманти йывăçсен çулçисем симĕс-ха. Хурамапа ăвăс, çĕмĕрт çулçисем çеç кăштах тĕсне улăштарма пуçланă. Палан çырли вара симĕс çулçăсем хушшинчен аякранах хĕп-хĕрлĕн курăнса ларать. Вăл пиçсе мăнтăрланнă, алăпа кăшт тĕкĕнсенех сĕткенне пĕрĕхтерет. Çавăнтан пĕр-ик кун маларах пуçтарма тытăнмалла та ăна, сапакипе хуçса илмелле. Ача чухне палана питĕ юратса çиеттĕмĕр. Çавă халĕ те асран тухмасть. Палана анне кăмакана чукунпа лартатчĕ. Хутăш хĕрлĕ кăшман тураса яратчĕ (сахăр ун чухне уявсенче те сайра тутанса курнă), хутăша çăнăхпа пăтрататчĕ. Унтан чукуна чустапа хуплатчĕ. Çапла паланпа кăшман пăс тухмасăр питĕ паха пиçетчĕç, çисе тăранма çукчĕ ăна. Палан пĕçернĕ кун пирĕншĕн уяв пекех туйăнатчĕ. Çак илемлĕ, кашнин чунне çывăх йывăç халăх, уйрăм сăвăçсемпе композиторсем хывакан юрăсенче те вырăн тупнă. Сăмахран, Ф. Лукинăн "Уçланкăри палан" юрри халăхра анлă сарăлнă.

Паланӑн ҫулҫисем сарлака та илемлӗ, чечекне, ҫимӗҫне шӑпӑрла пуҫтарӑнса зонт пек хупласа тӑрать. Чечекӗ - шурӑ, шупка шурӑ. Вӑл, сапакине ҫӳлелле кӑнтарса тӑнӑран, хӗлле йывӑҫ ҫине ӳкнӗ юр чӑмакки пек курӑнать. Палан икӗ-виҫӗ метртан ҫӳлех ӳсмест.

Ҫӗр ҫинче 120-200 тӗрлӗ палан теҫҫӗ. Вӑл ҫӗр чӑмӑрӗн нумай-нумай кӗтесӗнче тымар янӑ. Пирӗн ҫӗршывра сакӑр тӗрлӗ палан ӳсет. Илемӗшӗн те лартса ҫитӗнтереҫҫӗ ӑна. Ҫимӗҫӗшӗн, унӑн уссишӗн ытларах кӑмӑлласҫӗ тесен те йӑнӑш мар.

Палан тӗшши шурӑ, ҫемҫе, ҫӑмӑл. Хуппи ҫинче тир-сӑран тунӑ ҫӗрте кирлӗ сухӑр, тӗрлӗ йӳҫек нумай. Йывӑҫ тӗшшинчен кил-ҫуртра апат-ҫимӗҫ пӗҫернӗ ҫӗрте усӑ курмалли йӗтӗр, ҫекӗллӗ йӗтӗр, тукмак тӑваҫҫӗ, тетте ӑсталаҫҫӗ. Ҫуркунне сӳнӗ йывӑҫ хуппине вӗретнӗ шывпа юн юхасран чармалли эмел вырӑнне усӑ кураҫҫӗ. Палан ҫырлинчен тунӑ варени е сӗткен янӑ чей ӑш-чике кантарать, кӑмӑла уҫать. Ӑна юн пусӑмӗ хӑпарса кайнинчен те ӗҫме хушаҫҫӗ.

Палан вӑрӑран, ҫавӑн пекех тымартан хунав ярса ӗрчет. Лутра йывӑҫсем хушшинче хӑйне лайӑх туять, хӗвеле юратать, ҫӳлӗреххисем хуплама тытӑнсан нумай пурӑнаймасть.





# ÇĔМĔРТ

Вăрман уçланкисенче, юхан шывсен тăрăхĕнче çуркунне чи малтан çĕмĕрт симĕсленме пуçлать, чечеке ларать. Çĕмĕрт пурин кăмăлне те каякан, пурне те савăнăç кӳрекен йывăç. Вăл яланах ăшă кăмăллă йывăç. Çуркунне, шурă чечек шупăрĕпе витĕнсен, кулать тейĕн ăна. Аякранах ырă шăршă паракан çĕмĕрт чечеккипе савăнса-киленсе санăн та кăмăлу çĕкленет-хăпартланать. Пахчасенчи, парксемпе скверсенчи çĕмĕрт ялсене, поселоксемпе хуласене илем кӳрет.

Çĕр çинче 15 тĕрлĕ çĕмĕрт çитĕнет, пирĕн çĕршывра - тăватă тĕрли. Пирĕн тăрăхри çĕмĕрт 17 метр çӳллĕшне, вуллин диаметрĕ 40 сантиметра çити ӳсет. Вăл пулăхлă çĕр çинче, юхан шыв хĕрринчи вăрмансенче, çырма-çатра хĕррисенче хăвăрт ĕрчет. Хурт-хăмăр çĕмĕрт чечекĕ çинче нектар сахал мар пухать. Вăрăм сапака çинче пиçсе çитнĕ хура çĕмĕрте пурте юратса çиеççĕ. Çĕмĕрт сурçĕрти вăрмансенче те тымар янă. Улма-çырла йывăççисем ӳсмен çĕрте уяв кунĕсенче çĕмĕрт кукăлĕ пĕçерессĕ. Унпа эрех тунă çĕрте усă кураççĕ. Çĕмĕрт çырлине варвиттипе аптракан çынна

çитерме, унран вĕретнĕ шыва ĕçтерме хушаççĕ. Çĕмĕрт хуппи сăрă тума каять.

Çĕмĕрт чей çырли йышне кĕрет. Унăн тĕшши çемçе, шупка шурă, шупка сарă тĕслĕ. Хуппинчен уйăрнă тĕшĕ шупка-хĕрлĕ тĕспе витĕнет, хăмăрланма-хуралма тытăнать. Унран кил-çуртра усă курмалли тĕрлĕ япала тăваççĕ, каткапичке, çӳпçе кăшăллаççĕ. Çулçине выльăхсем аван çиеççĕ.

Çуркунне эпĕ çĕмĕрте ытти йывăçран ытларах сăнатăп. Унăн папкисем çурăлнă тĕле çĕр хĕл ыйхинчен вăранса ăшăнса çитет, çурхи кун вăй илет.

Пĕвесенчи шапасем юрлама тытăннă кунсем те çĕмĕрт чечекĕ ӳсме тытăннă вăхăтпа пĕр килеççĕ, ăсансемпе карăксен "аслă туйĕ" пынине систереççĕ.

Çĕмĕрт çеçкин ырă шăрши тавралăха саланнă вăхăтра карăксен "туйĕ" вĕçленет тата кĕтсех тăр - паян-ыран вăрăм туна тапса тухать.

Пирĕн вăрмансенче йыт çĕмĕрчĕ те анлă сарăлнă. Анчах ăна çимеççĕ.

## ÇĔМĔРТ

*Сăвви Георгий Орловăн* *Кĕвви Григорий Хирбюн*

Ирхине. Хĕвел тухасшăн
Эп кĕретĕп пахчана.
Çамрăк çĕмĕрт шăппăн, ăшшăн:
Килсе кур, тет пек мана.

Унăн тумĕ юр пек шурă,
Таврара - симпыл тути.
Çĕмĕрт тăррине чуптурĕ
Йалтăркка хĕвел çути.

Сисрĕ-шим таçтан шух çилĕ
Пахчана эп кĕнине?
Те кулса халь, те вăл çиллĕн
Сирчĕ çĕмĕрт çеçкине.

Каччăпа хĕр тĕлĕреççĕ,
Ларнă вăрттăн сак çине:
Ай, мĕн-ма-ши, çĕмĕрт, эсĕ
Вăратмастăн вĕсене?



## *ШĔШКĔ*

Çуллахи вăрманта пулма тӳр килмен çын та август-сентябрьте вăрмана кĕрсен шĕшкĕ шырама тытăнать, йывăç тăрринче те, ун таврашĕнчи çĕр çинче те мăйăр тупма ĕмĕтленет: пĕчĕк хуранти пăтта тутанса пăхасшăн-çке-ха вăл.

Шĕшкĕ хутăш вăрманта та, кил-çурт таврашĕнче те ӳсет, хĕвел питех ӳкмен вырăнта та аптрасах каймасть. Çулçи сарлака, çемçе-çемçе тĕклĕ. Пĕчĕк чухне пĕр çӳллĕш ӳснĕ хурамапа шĕшке пăтраштарасран йывăççен çулçисене сăтăркаласа пăхаттăм. Чечекки - курланкăра. Çимĕçĕ те унтах ӳссе çитĕнет. Вăл хытă хупăллă. Шĕшкĕ вăрăран - мăйăртан, хунав тухса ĕрчет. Вăл вунă-вуникĕ çултан ытла пурăнмасть, хăвăрт çĕрет.

Шĕшкĕрен çатан карта авнă, унпа, питĕ хĕрӳллех пулмасан та, вутă вырăнне те усă кураççĕ.



## *ШĂЛАН*

Шăлан - хăй тĕллĕн çитĕнекен роза йăхĕнчи тĕмĕ. Пирĕн тăрăхра йывăç евĕр ÿсекен шăлан вăй илнĕ. Курăк пек лутра, çатан тăрăх авăнса ÿсеккеннисем те пур. Чечекĕ пысăк, тĕрлĕ тĕслĕ. Тытăннă çырлан пусĕ тĕклĕ. Шăлан вулли-туни йĕплĕ-йĕплĕ. Тураттисем çинче йĕппи тата вăрăмрах. Шăланлăха пырса кĕрсен, тухса кайма çук, ÿт-тире йăлт чĕрсе-юнăхтарса пĕтеретĕн. Шăлан вăрăран, тымартан хунав тухса та ĕрчет.

Çĕр çинче 350-400 тĕрлĕ, теприсем каланă тăрăх - 100-250 тĕрлĕ шăлан ÿсет. Пирĕн çĕршывра 250 тĕрлĕ, теприсем çырнă тăрăх 60-150 тĕрлĕ шăлан тымар янă. Вăл çĕр чăмăрĕ çинче питех те анлă сарăлнă йывăç-курăк. Ăна чылай çĕрте илемшĕн лартаççĕ. Ăнăн этем сывлăхĕшĕн паха çырли пур. Унта ытти витаминсемпе пĕрле С витамин нумай. Çавăнпа ăна чĕрĕлле çиме хушаççĕ. Хăйĕн пахалăхне вăл типĕтсен те, консервласан та çухатмасть. Медицинăра шăланран витаминлă сĕткен тăваççĕ. Шăланран хатĕрленĕ çăра хутăша уçă сурана хăвăртрах ÿт илтерме сĕреççĕ. Унпа ÿт-тир, пĕвер-пÿре чирĕсенчен те сиплеççĕ.



## ХĂМЛА ÇЫРЛИ

Карçынкка е ытти савăт йăтса вăрмана хăмла çырли пуçтарма каякана çынсене июльте курма пулать. Май вĕçĕнче - июнь пуçламăшĕнче чечеке ларса çырла 25-30 талăкран пулса çитет. Вăхăтра пуçтармасан вăл хăвăрт хуртланать, хуралса çĕрме тытăнать. Çĕр çинче 120 тĕрлĕ хăмла çырли ÿсет.

Хăмла çырлине çынсем пирĕн эрăччен виççĕмĕш ĕмĕртех пĕлнĕ. 4-мĕш ĕмĕрте вара ăна лартса тума тытăннă. 16-17-мĕш ĕмĕрсенче сортлă хăмла çырли ĕрчетме пуçланă. Хăмла çырли Раççейре 19-мĕш ĕмĕрте тымар янă. Вăл вăрăран та, хунавран та ĕрчет.

Çырлара, сортне кура - 5,7-11,5 процент сахăр, 1-2 процент органикăлла йÿçек. Кашни 100 грамм çырла пуçне 91,1-44 миллиграма çити В витамин, каротин тата паха шăршă паракан веществосем пур. Çырлана чĕрĕлле те çиеççĕ, унран варени, сироп, эрех тăваççĕ, сĕткенне кăлараççĕ. Хăмла çырли варенинчен, типĕтнĕ çырлинчен вĕретнĕ шывпа шăнса пăсăлнă хыççăн тарласа сипленме хушаççĕ. Çыр-

лана медицинăра эмелсен тутине лайăхлатма усă кураççĕ.

Çакна асăнмалла: пирĕн çĕршывра халĕ хăмла çырлин 70 тĕрлĕ сортне лартса тăваççĕ. Вĕсене кашнине хăйне евĕр апатлантарса-пăхса тăмалла. Çавăн чухне çеç кирлĕ чухлĕ çимĕç илме пултаратăн. Хăмла çырлине тапăнакан хурт-кăпшанкă та нумай, чирĕ те сахал мар. Чирлĕ йывăç çырлине çиме хушмаççĕ, ăна хăвăртрах пĕтермелле.

## ШУРШĂЛ ЙĂМРИСЕМ

*Сăвви Валентин Урташăн* *Кĕвви Тимофей Фандеевăн*

Узинта ÿсет черешньă,
Шуршăлта - йăмра.
Çĕр çинчех эпир туслашнă,
Пулнă уçлăхра.

*Хушса юрламалли:*

Ах, йăмра, йăмра,
Шуршăлти йăмра,
Хуть ăçта каям - эсĕ асăмра.
Ах, йăмра, йăмра,
Шуршăлти йăмра,
Манăн умăмра, савнă юррăмра.

Çурхи каç пирте илемлĕ,
Калаçать тăмра
Йăмрасен айне иленнĕ
Шавлă вăйăра.

Çурхи каç сирте илемлĕ
Бубен сассипе,
Каштансен айне иленнĕ
Сар хĕр вăййипе.



# *КĔТМЕЛ*

Çак çырла йывăçĕ-курăкĕ ытларах йăлăм вăрманĕнче йăл илнĕ. Вăл хыр-чăрăш тата хутăш вăрмансенче ӳсме юратать-çке-ха. Кунтах типнĕ торф вырăнĕ те сахал мар. Ялан симĕс çулçăллă тĕмĕ-курăк 25 сантиметр çӳллĕшне çити ӳсет. Унăн пĕр чăмăра пуçтарăннă пиççе çитнĕ янкăр хĕрлĕ çырли аякранах курăнать. Çырлинче сахăр, органикăллă тĕрлĕ йӳçек тата çын организмĕшĕн усăллă ытти вещество нумай. Вăл çырла халĕн те, йӳçĕтсен те лайăх упранать. Çырларан варени те, повидло та, маринад та хатĕрлеççĕ. Кĕтмел çулçине вĕретнĕ шыва шăк çулне тасатма ĕçеççĕ.



## ЙĔЛМЕ

Йĕлмене ачаран "Йĕлме йĕлтĕрĕ" тенипе аса илсе юлнă. Халĕ ĕнтĕ йĕлтĕрне те хими хутăшĕнчен, пластикран тăваççĕ. Йĕлмепе хурама - пĕр йăхри йывăççем.

Йĕлме 40 метр çӳллĕшне çити ӳсет. Унăн вуллин диаметрĕ икĕ метра яхăн пулать. Çĕр çинче 30 тĕрлĕ йĕлме, пирĕн çĕршывра - 10 тĕрлĕ йĕлме ӳсет. Йĕлме çуркунне çулçăсем сарăлма тытăниччен чечеке ларать. Вăрри май уйăхĕнче пулса çитет. Вăл ясмăк евĕр çӳхе, çунатлă, Америкăра, Китайра ӳсекен йĕлме кĕркунне чечеке ларать, вăррийĕ те кĕркунне пулса çитет. Йĕлме нӳрĕ вырăнта, пулăхлă çĕр çинче ӳсме юратать. Тĕрлĕ-тĕрлĕ йĕлмене тавралăха илем кӳме, çырма-çатра ишĕлесрен çĕре хытарма лартса çитĕнтереççĕ. Йĕлме тĕшшипе строительствăра анлă усă кураççĕ. Вăл сĕтел-пукан промышленноçĕн паха чĕр таварĕ шутланать. Çулçине тата çамрăк тураттине выльăх-чĕрлĕхе çитереççĕ.

# ЮЛАШКИНЧЕН КАЛАНИ

Чăваш халăхĕ - Атăлпа Кама тăрăхĕнче пурăннă чи авалхи халăхсенчен пĕри. Кунта вăрманĕ-çаранĕ те, юхан шывĕ-кÿлли те сахал мар пулнă. Çав аваллăхран сыхланса-упранса юлнă вăрман тымарĕ халĕ те вăйра, çирĕп. Вăл, ырă çынсем тăрăшнипе-пулăшнипе, çĕнĕ хунав ÿстерет. Паян чăвашра вăрман çĕрĕ 594400 гектар шутланать. Унта йывăç ÿсекен вырăн - 538 пин гектар. Хыр - 156 пин гектар, юман - 129 пин гектар, чăрăш - пĕр пин гектар, çăка 50 пин гектар çинче ÿсет. Ытти лаптăка хурăнпа ăвăс тата тĕрлĕ йывăç йышăнать.

Ĕлĕк-авал çĕрĕн пысăк пайне вăрман хупласа тăнă чухне вăл пĕтес шухăш çынсен пуçне пырса та кĕмен: каснă та каснă ăна хăйсене усă курма. Çулсем-ĕмĕрсем иртнĕ май вăрман та çаралма-пĕтме тытăннă, лаптăкĕ пĕчĕкленсех пынă.

Асатте-асаннесем е атте-аннесем ас тăвасса вăрман ÿснĕ, халĕ уй пулса юлнă вырăнсем пирĕн ял - Санькасси тăрăхĕнче те сахал мар. Вăрман строительство материалĕ парать, тĕрлĕ йывăç хими промышленноçĕн паха чĕр таварĕ шутланать. Вăл çĕр питне çырмаçатра çурса пĕтересрен хÿтĕлет, çут çанталăк пулăм-улшăнăвне йĕркелеме пулăшать, хĕвеллĕ çанталăкра ирĕклĕ кислород кăларать. Кислород вара çĕр çинчи мĕн пур чĕр чуна кирлĕ. Пĕр гектар вăрман çулталăкра пĕр çынна ĕмĕр пурăнмалăх кислород кăларать. Вăрман лаптăкĕ çĕр пичĕ çинче сахалах маррине шута илсен, сывлăш таса кислородпа тулса лармалла пек. Çук иккен: тĕнчере çуллен пÿртçурта ăшăтма, металлурги промышленноçĕнче тата ытти ĕç тума вут-шанкă, çĕр кăмрăкĕ, газ, нефть-мазут, тĕрлĕ техникăна ĕçлеттерме бензин-керосин çунтарма вăтамран $9 \cdot 10^9$ тонна кислород кирлĕ.

Вăрман çаралнине туйса-сиссе ырă кăмăллă çынсем ăна çитес ăрусем валли упраса-сыхласа хăварма йывăçсем лартма тытăннă. Уйрăмах юманпа хыра, вĕсен пысăк уссине кура, ĕрчетме тăрăшнă. Çак ĕç Раççейре тата пирĕн тăрăхра 1730 çулсенче, карапсем тума йывăç суйласа илнĕ тапхăрта пуçланнă. Пурăнмалли çурт-йĕр лартман, пахча-ана йĕркелемен, утарсем вырнаçтарман çĕрсене йĕкел акнă. Çак ĕçе патша Указĕпе килĕшÿллĕн тытăннă. Шупашкар уесĕнче, сăмахран, карап тумалли юман нумай лартса çитĕнтернĕ. 1768 тата 1773 çулсенче хальхи Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Турханкасси тăрăхĕнче лартнă юмансем, тĕслĕхрен, паянхи кунччене сыхланса юлнă. Чăвашра вăрман лартас енĕпе нумай тăрăшнă çынсенчен пĕри вăл

Бронислав Ильич Гузовский (1860-1914 ç. ç.) ученăй-вăрманçă. Вăл Ильинка лесничествинче 25 çул ĕçленĕ, юман нумай лартса хăварнă. Унăн опычĕпе Вăтам Атăл тăрăхĕнчи вăрманçăсем çеç мар, пĕтĕм Раççейрисем анлăн усă курнă.

Вăрман тăрăхĕсем лартас-чĕртес ĕçре Ф. Ф. Янковский (1860-1923 ç. ç.), М. Н. Овчинников (1900-1979 ç. ç.), В. И. Ремизович, Л. Н. Никифоров, А. И. Удачин, Раççейĕн тата Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ лесовочĕ А. В. Фадеев тата ытти лесничисем нумай тăрăшнă. Вĕсен пархатарлă ĕçĕ - ĕмĕрлĕх чĕрĕ палăк, хальхи тата килес ăрусен сывлăхĕ-тĕрекĕ.

Чăваш вăрманне 72 вăрман хуçалăхĕ пăхса-типтерлесе тăрать. Вĕсенчен кашниех çуллен çĕнĕ вăрман лаптăкĕ лартма тăрăшать. Хальхи вăхăтра чăваш вăрман территорийĕнче вăрлăх йĕкел акса, тымарĕпе лартса çитĕнтернĕ вăрман тăрăхĕсем 200 пин гектар ытла. Пуласлăхшăн тăрăшакан вăрманçăсен тивлечĕпе çамрăк хунав лартнă лаптăк çуллен 2500-3000 гектар хушăнать. Кăçал, сăмахран, республикăра çĕнĕрен 2500 гектар йĕкел акнă. Вăрман питомникĕсенче 19 гектар йывăç вăрлăхĕ акса хăварнă. Акă Йĕпреçри вăрман хуçалăхĕнче (директорĕ Г. Н. Урмаков, тĕп лесничийĕ Н. К. Кириллов), 375 гектар, Опытлă вăрман хуçалăхĕнче (М. А. Николаев, В. Н. Тарапыгин), 210 гектар вăрман лаптăкĕ хутшăннă. Улатăр, Патăрьел, Сĕнтĕрвăрри, Кĕтне, Кармалинск, Ильинка, Сурăм лесничествисем те çĕнĕрен хунав сахал мар лартнă.

Тĕрлĕ сăлтава пула юлашки çичĕ çулта юман чылай вăйсăрланчĕ, йĕкел пачах пулмарĕ. Пĕлтĕр вара вăл ăнса чăмăртанчĕ, лайăх пиçсе çитрĕ, ăна нумай пухса юлнă. Лартнă йĕкел чылай çĕрте парка шăтса тухнă. Çакă чăваш вăрманĕнчи юманлăхсене çĕнетме шанăç парать.

Республикăри колхозсемпе совхозсен, юлташлăхсен вăрманĕсем те тăван тăрăха илем кӳреççĕ. Вĕсем 13760 гектар çинче вăй илнĕ. Шыв-шур çурса пĕтересрен çырма-çатра тăрăхне 556 гектар, уй хӳтлĕхĕ валли 120 гектар лартнă йывăçсен тымарĕсем те çирĕп.

Кирлĕ вăхăтра пăхса-имçамласа тăмасан вăрмана тĕрлĕ хурткăпшанкă, чир-чĕр хытă хавшатать. Пĕр вăхăтра йышланнă пăшисем те çамрăк йывăçсене сахал мар пĕтернĕ. Вăрманăн тепĕр хăрушă тăшманĕ вăл - пушар. 1972 çулта акă пушар 47 пин гектар лаптăка сиен кӳнĕ, çав шутран 34 пин гектар - Улатăрпа Йĕпреç тăрăхĕнче. Вăрмана тĕрлĕ ĕçпе çӳрекенсен, туристсен типтерсĕрлĕхне пула,



кирлĕ е кирлĕ мар вырăнта шăрпăкпа алхаснăран кăçал пилĕк уйăхра çеç йывăç-курăк чĕрĕлсе кайнă 55 тĕслĕх тупса палăртнă. "Хĕрлĕ автан" 31 гектар çинчи вăрмана сиен кӳнĕ. Пушарсене вăхăтра сӳнтереймен пулсан сиенĕ тата пысăкрах пулатчĕ. Сиксе тухма пултаракан инкек-синкекрен Чăваш вăрманне 27 пушар станцийĕ сыхлать. Вĕсем малашне те сыхă тăччăр, вăрмана çӳрекенсем те тимлĕ пулччăр.

Вăрман ӳстерме те, унпа усă курма та пĕлмелле. Пĕлтĕр, сăмахран, икĕ пин те 840 гектар вăрман касса типтерленĕ. Çав лаптăк çĕр шыва 624 пин кубла метр йывăç тĕшши панă.

Хисеплĕ вулаканăмăрсем, хамăр тăрăхри вăрман, унта ӳсекен йывăçсемпе тĕмĕсен илемĕ, вĕсен усси, вăрманти чĕрчунсемпе кайăксен пурнăçĕ çинчен кăштах та пулсан çĕннине пĕлме пултартăр пулсан савăннă пулăттăм. Çак пуянлăха упрама вĕренсен-хăнăхсан пирĕн пурнăç тата илемлĕрех, сывăрах пулĕ.

## ТУПМАЛЛИ


Вăрман . . . 3
Юман . . . 6
Хыр . . . 9
Чăрăш . . . 12
Лиçван . . . 14
Çăка . . . 16
Ăвăс . . . 19
Хурăн . . . 22
Хурама . . . 25
Тирек . . . 27
Вĕрене . . . 29
Йăмра . . . 31
Çирĕк . . . 34
Пилеш . . . 36
Улмуççи . . . 38
Палан . . . 42
Çĕмĕрт . . . 44
Шĕшкĕ . . . 46
Шăлан . . . 47
Хăмла çырли . . . 48
Кĕтмел . . . 50
Йĕлме . . . 51
Юлашкинчен калани . . . 52



**АЛЕКСЕЕВ Осип Алексеевич**

**ЧĂВАШ ВĂРМАНĔ**

На чувашском языке

Ответственный за выпуск: А. В. Любимова, А. В Димитриев
РИО типографии № 1 г. Чебоксары
ЛР № 001 от 14.01.92 г.

Редактор **Ю. С. Семендер**
Художник, художественный редактор **Л. Я. Павлов**
Технический редактор **Г. Р. Евлампьева**

Подписано в печать 12.07.1996 г. Формат 60х84/16. Печать офсетная. Тираж 3000 экз.
Заказ № 913. Цена "С". Типография № 1 Министерства информации и печати Чувашской Республики. 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

